Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938
ОКТАБӖР
27
КӖҪНЕРНИКУН
248 (5061) №

Чӑваш Коммунӗ

21-мӗш ҫул тухать   ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн хаҫачӗ   Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактӑрӑн — 0—67, ред. заместитӗлӗн—3—97, редакци секретарӗн—4—40, парти пурнӑҫ пайӗн—0—85, йалхуҫалӑх пайӗн — 4—97, советсен пайӗн—0—88, промышлӗннӑҫ пайӗн—7—97, йалкорсен пайӗн—2—30, дежурнӑйӗн — 6—23.

Колхозри тупӑшсене тӗрӗс валеҫер

Партипе правитӗлствӑ колхозсене организаципе хуҫалӑх йенчен тӗреклӗ, колхозниксене пурне те пуйан та куљтурӑлӑ пурнакан туса ҫитерме пур майсене те туса панӑ. Пӗтӗм Сойузри колхозник-ударниксен пӗрремӗш сиесӗн трибуни ҫинчен ӗҫҫыннисен ҫулпуҫӗ Сталин йулташ ҫапла каларӗ: „Машинӑсемпе тата трактӑрсемпе усӑ курассине лайӑхлатсанах, ҫӗре лайӑх ӗҫлесессӗнех епӗр хамӑрӑн ҫимӗҫсен шутне икӗ хут, виҫӗ хут ӳстерме пултаратпӑр. Мӗнпур колхозниксене колхоз уйхирӗсен пуйан пурнакан труженникӗсем тума ҫакӑ ӗнтӗ питӗ ҫителӗклӗ".

Кулленхи ӗҫре ҫулпуҫӗн сӑмахне пурнӑҫа кӗртсе пырса, колхоз хресченӗсем Ленин—Сталин партийӗ йертсе пынипе йалхуҫалӑхӗнче пысӑк ҫитӗнӳсем туса пыраҫҫӗ. Ӑна ҫулленех пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илме пуҫланинчен те, колхозниксем ӗҫкунӗсем тӑрӑх илекен тупӑшӗсем ӳссе пынинчен те, колхозниксен пуйан та телейлӗ пурнӑҫӗ чечеклense пынинчен те лайӑх курма пулать.

Йалхуҫалӑхӗнче ҫуллен 7—8 мӗлйард пӑт тӗштырӑшӑн социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса, колхоз ӗҫӗнче тӑрӑшса тата тӳрӗ ӗҫлесе пырса колхозлӑ хресченсем кӑҫал, ҫанталӑк ҫилӗшӳлӗ пулмарӗ пулин те, вӑйлӑ тырпул туса илчӗҫ. Колхозсем кӑҫал укҫан илнӗ пӗтем тупӑшран 60—70 процент таран ӗҫкунӗсем тӑрӑх валеҫеҫҫӗ. Акӑ, Шупашкар районӗнчи Молӑтӑв йачӗпе тӑракан колхозра ӗҫкунӗ пуҫне 8-шар килограм тырӑ, 4-шар тенкӗ укҫан валеҫӗнмеле. Ишлей районӗнчи „Парижская Коммуна" колхоз 6-шар килограм тырӑ тата 3-шер тенкӗ укҫан валеҫет. Кунашкал тӗслӗхсем районсенче ҫӗршерӗн шутланаҫҫӗ. Ӗҫкунӗ ҫине валеҫӗнекен тупӑш ӳссе пыни вӑл пӗтӗмпех колхозла строй ҫӗнтернинчен килет.

Йалхуҫалӑхӗнче колхоз стройӗ ҫӗнтерни тата колхоз уйхирӗсен тупӑшӗ ӳссе пыни колхоз руководитӗлӗсемпе ревизи комиҫҫисем умне тата та пысӑк, ответлӑ ӗҫ каларса тӑратать. Ку вӑл ертел тупӑшӗсене унӑн членӗсем хушшинче ертелӗн кашни членӗ мӗн чухлӗ ӗҫкунӗ тунӑ тӑрӑх кӑна валеҫсе парасси пулать. Тупӑшсене ӗҫкунӗсем тӑрӑх валеҫнӗ чухне йалхуҫалӑх ертел уставӗн 6—11—15-мӗш пунктисене тӗп никӗсе хумала. Устав хушнӑ пек, колхозӑн кашни членӗ миҫе ӗҫкунӗ ӗҫлесе илнине кӑтартакан ведӑмӑҫе пурне те пӗлтерме, колхозӑн тупӑшӗсене валеҫнине ҫирӗплетекен пуху умӗн икӗ ерне малтан, курӑнакан вырӑна ҫакмала.

Тупӑшсене ӗҫкунӗсем тӑрӑх валеҫме тӗплӗн хатӗрленсе пымала. Колхозсенчи ревизи комиҫҫисен тупӑшсене пӗтӗмпех сталинла устав тӑрӑх валеҫсе панине, йалхуҫалӑх продукцисене шутсӑр салатса, ҫаратса тата пӑхманнипе пӑсса-ҫӗртсе пӗтересрен асӑрхаса тӑмала. Колхозникӑн тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫлесе илнӗ пӗр ӗҫкунӗ те шута илмесӗр йулмала мар, ҫав вӑхӑтрах пӗр ӗҫкунӗ те ытлашши шутласа пани ан пултӑр. Ку йенӗпе бригадирсемпе счетоводсен нумай ӗҫлемеле пулать. Вырӑнсенчен килекен ҫырусем чылай колхозсенче ӗҫкунӗсене темиҫе уйӑх хушши ӗҫкӗнекисем ҫине лартса паманни ҫинчен те калаҫҫӗ. Акӑ, Сиккасси (Канаш р.) колхозӗнче кӑҫал ҫӑвӑпе те колхозниксем ӗҫлесе илнӗ ӗҫкунӗсене ӗҫ кӗнекисем ҫине лартса паман. Ҫавӑн пекех Ҫӗнӗ Мами колхозӗнчи (Шӑхасан р.) колхозниксем те халиччен ӗҫлесе миҫе ӗҫкунӗ туса илнине пӗлмеҫҫӗ. Паллах, ҫак ҫитменлӗхсем вӗсем колхозсенчи ревизи комиҫҫисем ӗҫлеменнинчен килеҫҫӗ. Ишлей районӗнчи „Чандр" колхозри ревизи комиҫҫи ҫулталӑк хушшинче те пӗрре анчах ревизи тунӑ.

Малашне ӗҫкунӗ тӑрӑх валеҫмели йалхуҫалӑх продукцисене укҫасӑр йе йӳнӗ хакпа салатмала мар, вӑл колхозниксен ӗҫкунӗ хакне чакарать. Йалхуҫалӑх ӗҫӗсене тунӑ чухне организациленӗ пӗрлешӳлӗ столовӑйсем валљи колхозран илсе расхутланӑ тырпула хаљ тупӑшсене валеҫнӗ чухне столовӑйӗнче апатланнӑ колхозниксенчен пуринчен те тыррӑн тытса йулас пулать. Столовӑй валљийех пасарсенчен укҫа парса илнӗ ҫимӗҫсемшӗн те укҫа-тенкӗ тупӑшӗнчен членсене ӗҫкунӗсем тӑрӑх укҫа валеҫнӗ чухне тытса йулмала. Колхозниксенчен тытса йулнӑ тырпулпа укҫа-тенкӗне ӗҫкунӗсем тӑрӑх колхозниксенех валеҫсе памала.

Колхоз руководитӗлӗсен укҫа-тенкӗ тупӑшӗнчен строитӗлствӑ тата административлӑ хуҫалӑхлӑ расхутсем валљи уставпа кӑтартнинчен ытлашши укҫа-тенкӗ хӑварма йурамасть. Ку тӗлӗшпе ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Тӗпкомӗн „Колхозсенче тупӑшсене ӗҫкунӗсем тӑрӑх тӗрӗс валеҫменни ҫинчен" йышӑннӑ постановленине вӗҫне ҫитиччене пурнӑҫа кӗртни кирлӗ. Партипе правитӗлствӑ вырӑнсенчи организацисене йалхуҫалӑх ертел уставне пӑсса тата колхозниксен интересӗсене хирӗҫ кайса колхоз пурлӑхне саккунсӑр расхутланипе айӑпа кӗнӗ ҫынсене, колхоз ӗҫне сутакансем тата халӑх тӑшманӗсене пулӑшакансем ҫине пӑхнӑ пек пӑхса уголовнӑй йӗркепе айӑплама хушаҫҫӗ. Анчах ҫав директивӑна вырӑнсенчи организацисем пурте тӗплӗн пурнӑҫа кӗртсе пымаҫҫӗ-ха. Вырӑнсенчен пӗлтернӗ тӑрӑх, хӑшпӗр колхоз руководитӗлӗсем пайанччене колхоз укҫи-тенкине хӑйсем пӗлнӗ пек тыткалаҫҫӗ.

Тупӑшсене валеҫнӗ ҫӗрте правлени членӗсем йенчен йе районри ҫӗрӗҫ пайӗсем йенчен нимӗнле администрацилени те пулмала мар. Пур ыйтусене те ертел членӗсен аслӑ пухӑвӗ татса памала. Ертел пухӑвӗ йышӑнни пур членсемшӗн те саккун. Пуху йышӑнӑвне пурин те пӑхӑнмала тата ӑна пурнӑҫласа пымала.

Колхозсенче тупӑшсене ӗҫкунӗсем тӑрӑх валеҫнипе кӑҫал тунӑ ӗҫсене вӗҫлесе, колхозниксен массине ҫитес ҫулти вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешме мобилизацилемеле. Партипе совет оргӑнӗсен тата ҫӗрӗҫ пайӗсен руководитӗлӗсен колхозсене тупӑшсене валеҫнӗ чухне те тырпулсене пуҫтарса кӗртнӗ чухнехи пекех тата государствӑ умӗнчи обйазатӗлствӑсене вӑхӑтра парса татма пулӑшнӑ пекех пулӑшмала.

Мускав, Кремљ—Сталинпа Молӑтӑв йулташсене

Хаклӑ Иосиф Виссарионович тата Вйачеслав Михайлӑвич!

Пайан епӗр пирӗн йуратакан партин Тӗп Комитечӗн йачӗпе сирӗн саламлӑ телеграммӑна илтӗмӗр.

Пирӗн дрейф пуҫланни ҫулталӑк тултарнӑ кун аслӑ уйав пулса тӑчӗ. Пирӗн чӗресем есӗр пирӗншӗн тӑрӑшнипе, пире шаннипе хӗпӗртесе тулчӗҫ. Епӗр, пирӗн аслӑ, йуратнӑ Тӑван ҫӗршывӑн вунпилӗк совет патриочӗ,—коммунисссен партийӗ, Есӗр, йуратнӑ Сталин йулташ пӑхса ҫитӗнтернӗскерсем,—хамӑр дрейфран болљшевикла хастарлӑхӑн, умра тӑракан пысӑк задачӑсене пурнӑҫлассин тӗслӗхӗ туса хурӑпӑр.

Нимӗнле йӑвӑрлӑх та, хӑрушлӑх та пирӗншӗн хӑрушӑ мар. Партипе правитӗлствӑ тата пӗтӗм аслӑ халӑх пирӗн ҫине сисӗмлӗн пӑхни пире ҫирӗплӗх парать, никам ҫӗнтерейми тӑвать.

Тӗп Комитетпа Правитӗлствӑна вӗсем пирӗншӗн тӑрӑшнӑшӑн пысӑккӑн тав тума тата пирӗн алӑра хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн Хӗрлӗ йалавӗ ҫӗнтерӳ патне ҫитиччене ҫирӗппӗн тӑрасса епӗр шанса тӑни ҫинчен пӗлтерме ыйтатпӑр.

«Седов» коллективӗ хушнипе:
Бадигин,
Трофимӑв.

12 пин йединоличник колхоза кӗнӗ

Калинин облӑҫӗнче йулашки çур çул хушшинче 12 пин йединоличник ытла колхоза кӗнӗ. Чылай районсенче ҫӗнӗ колхозсем организациленӗ.

(ТАСС).

Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗн командирӗсене, политработникӗсене, врачсене тата красноармейӗцсене Совет Сойузӗн Геройӗ йатне парасси ҫинчен

ССРС Верховнӑй Совет Президиумӗн УКАЗӖ

Хасан кӳлли районне сыхланӑ ҫӗрте кӗрешӳлӗ заданисене кӑтартулӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата ҫав ӗҫре геройлӑх кӑтартнӑшӑн **Ленин** орденӗ парса Совет Сойузӗн Геройӗ йатне парас:

1. Кӗҫӗн командира—Николай Михайлӑвич **Баринӑва**
2. Отделени командирне—Голифан Аббубекирович **Баторшина**
3. Капитана—Михаил Степанӑвич **Бочкарева**
4. Иккӗмӗш рангри ҫар врачне—Борис Петрович **Бегоулӗва**
5. Политрук заместитӗлне—Ҫергей Никанорӑвич **Бамбурӑва**
6. Аслӑ лейтенанта—Андрей Иевстигнейӗвич **Боровикова**
7. Лейтенанта—Ваҫилий Михайлӑвич **Виневитина**
8. Лейтенанта—Вйачеслав Петрович **Винокурӑва**
9. Красноармейӗцa— Ҫергей Гаврилӑвич **Гуденкона**
10. Политрука—Иван Владимирӑвич **Гвоздӗва**
11. Кӗҫӗн командира—Григорий Ҫеменӑвич **Корнейӗва**
12. Красноармейӗца—Григорий Йакӑвлӗвич **Колесникӑва**
13. Аслӑ лейтенанта—**Дорофей Тимофейӗвич Левченкона**
14. Лейтенанта—Иван Романӑвич **Лазарӗва**
15. Лейтенанта—Алекҫей Максимӑвич **Махалина**
16. Лейтенанта—Иван Николайӗвич **Машљака**
17. Капитана—Константин Иванӑвич **Провалӑва**
18. Кӗҫӗн командира—Константин Иванӑвич **Пушкарйӗва**
19. Аслӑ политрука—Иван Алекҫейӗвич **Пожарскине**
20. Кӗҫӗн командира—Ваҫилий Ҫеменӑвич **Ракӑва**
21. Кӗҫӗн командира—Ҫемен Николайӗвич **Рассоха**
22. Лейтенанта—Петр Федӑрӑвич **Терешкина**
23. Кӗҫӗн командира—Алексей Иванӑвич **Тимакова**
24. Кӗҫӗн комвзвода—Иван Давидӑвич **Чернопйаткона**
25. Красноармейӗца—Йегор Ҫергейӗвич **Чуйкова**
26. Красноармейӗца—Йарим Мусокович **Йагудима**

ССРС Верховнӑй Совет Президиум Предҫедатӗлӗн
Заместителӗ—**Г. Петровский.**
ССРС Верховнӑй Совет Президиумӗн
Ҫекретарӗ—**А. Горкин.**

Мускав, Кремљ.
1938 ҫ., октабӗрӗн 25-мӗш.

Комкора Г. М. Штерна, дивизи комиссарне Ф. А. Ҫеменӑвскине тата комбрига П. В. Рычагова „Хӗрлӗ Йалав" орденӗпе наградӑласси ҫинчен

ССРС Верховнӑй Совет Президиумӗн УКАЗӖ

Хасан кӳлли районӗнчи кӗрешӳ операцисене чаплӑн йертсе пынӑшӑн ҫаксене „Хӗрлӗ Йалав" орденӗпе наградӑлас:

1. Комкора—Григорий Михайлӑвич **Штерна**
2. Дивизи комиссарне—Федӑр Алекҫейӗвич **Ҫеменӑвскине**
3. Комбрига—Павел Ваҫилйӗвич **Рычагова.**

ССРС Верховнӑй Совет Президиумӗн
Предҫедатӗлӗн Заместителӗ—**Г. Петровский.**
ССРС Верховнӑй Совет Президиумӗн
Ҫекретарӗ—**А. Горкин.**

Мускав, Кремљ. 1938 ҫ., октабӗрӗн 25-мӗш.

Хӗрӗхӗмӗш стрелковӑй дивизине ЛЕНИН орденӗпе наградӑласси ҫинчен

ССРС Верховнӑй Совет Президиумӗн УКАЗӖ

Хасан кӳлли районне сыхланӑ вӑхӑтра кӗрешӳлӗ заданисене кӑтартулӑн пурнӑҫланӑшӑн, личнӑй состав хӑйулӑ та паттӑр пулнӑшӑн хӗрӗхӗмӗш стрелковӑй дивизине Ленин орденӗпе наградӑлас.

ССРС Верховнӑй Совет Президиумӗн Предҫедатӗл
Заместителӗ—**Г. Петровский.**
ССРС Верховнӑй Совет Президиумӗн
Ҫекретарӗ—**А. Горкин.**

Мускав, Кремљ.
1938 ҫулти октабӗрӗн 25-мӗшӗ.

Вӑтӑр иккӗмӗш стрелковӑй дивизине „ХӖРЛӖ ЙАЛАВ" орденӗпе наградӑласси ҫинчен

ССРС Верховнӑй Совет Президиумӗн УКАЗӖ

Хасан кӳлли районне сыхланӑ вӑхӑтра чаҫсемпе подразделенисем хӑйулӑн та хӑватлӑн кӗрешнӗшӗн, личнӑй состав паттӑр та хӑйулӑ пулнӑшӑн вӑтӑр иккӗмӗш стрелковӑй дивизине „Хӗрлӗ йалав" орденӗпе наградӑлас.

ССРС Верховнӑй Совет Президиумӗн Предҫедатӗл
Заместителӗ—**Г. Петровский.**
ССРС Верховнӑй Совет Президиумӗн
Ҫекретарӗ—**А. Горкин.**

Мускав, Кремљ.
1938 ҫулти октабӗрӗн 25-мӗш.

Поҫйет Пограничнӑй отрйадне „ХӖРЛӖ ЙАЛАВ" орденӗпе наградӑласси ҫинчен

ССРС Верховнӑй Совет Президиумӗн УКАЗӖ

Хасан кӳлли районӗнче Йапони ҫарӗсене хирӗҫ пынӑ ҫапӑҫусенче ССР Сойузӗн государствӑ чиккисене сыхланӑ чух личнӑй состав хӑйне шеллемесӗр кӗрешнӗшӗн, хӑйулӑ, ҫирӗп тата паттӑр пулнӑшӑн Поҫйет Пограничнӑй отрйадне „Хӗрлӗ Йалав" орденӗпе наградӑлас.

ССРС Верховнӑй Совет Президиумӗн Предҫедатӗл
Заместителӗ—**Г. Петровский.**
ССРС Верховнӑй Совет Президиумӗн
Ҫекретарӗ—**А. Горкин**

Мускав, Кремљ.
1938 ҫулти октабӗрӗн 25-мӗш.

ССРС орденӗсемпе, „За отвагу" тата „За боевые заслуги" медаљсемпе наградӑлани

ССР Сойузӗн Верховнӑй Совет Президиумӗ йышӑннӑ Указ тӑрӑх, Хасан кӳлли районне сыхланӑ чух кӗрешӳри пысӑк та ответлӑ заданисене кӑтартулӑ, чи лайӑх пурнӑҫланӑшӑн, хӑйулӑ та паттӑр пулнӑшӑн командирсемпе начаљниксен, составне, красноармейӗцсене, начаљниксен составӗн ҫемйе членӗсене, госпитаљсен тата суту-илӳ флочӗн работникӗсене:

20 ҫынна Ленин орденӗпе, 120 ҫынна „Хӗрлӗ Йалав" орденӗпе, 120 ҫынна „Хӗрлӗ Ҫалтӑр" орденӗпе наградӑланӑ.

120 ҫынна „За отвагу" медаљпе, 120 ҫынна „За боевые заслуги" медаљпе наградӑланӑ. (ТАСС).

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: „Родина" самољот штурманӗ аслӑ лейтенант М. М. Расковӑ, 2-мӗш пилот П. Д. Осипенко, 2-мӗш рангри ҫар врачӗ Борщевски прогулкӑра, Подлипкӑри кану ҫуртӗнче.
А. Осипенко фото-ӳкерчӗкӗ (Сойузфото).

Героињӑ-љотчицӑсем Красноӑрскра

КРАСНОЙАРСК, октабӗрӗн 24-мӗш. Пайан Красноӑрскри ӗҫҫыннисем героињӑ-љотчицӑсене кӗтсе илме тӗттӗмлӗх вакзала пухӑнчӗҫ. Пуйӑса Иланскойран Богодола ҫити илсе пыма машинис-кривоносовӗц Селиверстов йулташа чыс тивнӗ. Вӑл пуйӑса расписанире кӑтартнӑ вӑхӑтран маларах илсе ҫитерет.

Акӑ, йулашки вакун ҫинче пуриншӗн те паллӑ ҫынсем—тӑван ҫӗршывӑн хӑйулӑ хӗрӗсем курӑнса кайаҫҫӗ. Гризодубӑвӑ, Осипенко тата Расковӑ йулташсем трибунӑ патне утаҫҫӗ. Пухӑннӑ ҫынсем вӗсене чысласа хыттӑн „урра" кӑшкӑраҫҫӗ. Чаплӑ митинг уҫӑлать. Крайӗҫтӑвком предҫедатӗлӗ Чернов йулташ крайри ӗҫҫыннисен йачӗпе „Родина" самољотӑн паттӑр екипажне саламлать. Унтан парти крайкомӗн ҫекретарӗ Кулаков йулташ тухса сӑмах калать. Митинга пухӑннӑ ҫынсем „Родина" самољотӑн командирне—Гризодубӑвӑ йулташа пысӑк хавaспа кӗтсе илеҫҫӗ. Вӑл хӑйӗнчен тата йулташӗсенчен Красноӑрск ӗҫҫыннисене ӑшшӑн саламлать, унтан вӗҫев ҫинчен, тӑван ҫӗршыва йуратни ҫинчен, пирӗн ҫӗршывра ҫынна пысӑк хисепе хурса уншӑн тӑрӑшни ҫинчен калать вӑл.

— Сывӑ пултӑр пире ҫӗнтерӳсем тума хавхалантаракан Сталин йулташ!—тесе вӗҫлет Гризодубӑвӑ йулташ хӑйӗн сӑмахне. Унӑн йулашки сӑмахӗсем Сталин йулташа чысласа нумайччен алӑ ҫупнипе витӗнеҫҫӗ. Сталин йулташ патне салам йама йышӑннӑ чухне каллех нумайччен алӑ ҫупса тӑраҫҫӗ.

Хӑйулӑ љотчицӑсене чечексем параҫҫӗ. Чукунҫул ҫинче ӗҫлекенсен арӑмӗсем пурҫӑнтан тӗрлесе илемлетнӗ „Ҫурҫӗрти полљус урлӑ вӗҫсе каҫнине" кӑтартакан йапала параҫҫӗ.

Вырӑнти вӑхӑтпа 6 сехет те 50 минутра Красноӑрскри ӗҫҫыннисем музыкӑпа тата: „Хаклӑ хӑнасем, ҫул телейлӗ пултӑр", тесе кӑшкӑрса пуйӑса ӑсатса йараҫҫӗ.

(ТАСС).

* * *

МАРИИНСК, октабӗрӗн 24-мӗш. (ТАСС корр.) Пайан ирпеле Ачинск тата Богодол станцийӗсенче „Родина" самољотӑн екипажӗ ҫитнӗ йатпа митингсем пулса иртрӗҫ. Стахановӗцсем-кривоносовӗцсем паттӑр хӗрарӑмсене саламласа хӑйсен ҫитӗнӗвӗсем ҫинчен каласа пачӗҫ, чукунҫулне мала кӑларма пулчӗҫ.

„Родина" самољот екипажӗ октабӗрӗн 27-мӗшӗнче Мускава ҫитет

Паттӑр љотчицӑсем—Гризодубӑвӑ, Осипенко, Расковӑ йулташсем октабӗрӗн 27-мӗшӗнче Мускава ҫитеҫҫӗ.

Љотчицӑсемпе пӗрле Мускава: „Родина" самољота тайгара пуринчен малтан шыраса тупнӑ Сахӑрӑв пилот, унӑн екипажӗнче тӑракансем: бортмеханик Демкин, бортрадис Быстров, пилот Бурлаков, авиаотрйад командирӗ Овечкин тата „Родина" екипажне тайгара пулӑшу панӑ Тихӑнӑв врач килеҫҫӗ.

Мускава чӗнсе илнӗ Деркунскипе Романӑв љотчиксем кайарахпа ҫитеҫҫӗ. „Родина" самољот анса ларнӑ вырӑна парашӳтпа сикнӗ Полежайӗв капитанпа спортивнӑй комиссар Йеремин, Хабаровскинчен Мускава кайма, „Родина" екипажӗнчен икӗ кун маларах тухнӑ.

(ТАСС).

Германин Америкӑри шпионла центр процесӗ

Њйу-Йорк, октабӗрӗн 24-мӗш. Германин Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штачӗсенчи шпионла центрӗ пирки пыракан процес перерыв хыҫҫӑн пайан ҫӗнӗрен пуҫланнӑ. Глазер защитникӗ Меттйус айӑпланакан Румриха, вӑл судра кӑтартса панисене варалас шутпа, чылай ыйтусем панӑ. Меттйус Румрихран: Глазер сана укҫа пама тивӗҫ мар-и, тесе ыйтнӑ. (Ҫак ыйтупа Меттйус Румрих Глазера ҫилленнӗ ҫын тесе кӑтартса парасшӑн пулнӑ). Анчах Румрих, апла мар, тесе ответленӗ. Румрих каланисене, шпионла центр ӗҫӗн ыйтӑвӗсене сӳтсе-йавнӑ чух епӗр сӑра нумай ӗҫнӗ, тенине шута илсе, Меттйус Румрихран: есӗ ун чух ӳсӗр пулман-и, тесе ыйтнӑ. Анчах Румрих татӑклӑнах, епӗ ӳсӗр пулман, тенӗ. Меттйус Румрих кӑтартса панисене варалама тӑрӑшни усӑсӑр пулнӑ.

(ТАСС).

Пĕтĕм Сойуҙри Коммуниссен (бођшевиксен) Партин

ИСТОРИЙĔ

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиççийĕ редакциленĕ. *КĔСКЕ КУРС.* *ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.*

3. Бођшевиксем тата меңшевиксем Столыпин реакцийĕн çулĕсенче. Бођшевиксем ликвидатăрсене тата отзовиссене хирĕç кĕрешни.

Реакци çулĕсенче парти организацисенче ĕçлеме ун умĕнхи тапхăртинчен—ревођуци сарăлса пынă тапхăртинчен нумай хут йывăртарах пулнă. Парти членĕсен хисепĕ хыттăн сахалланнă. Партин вакбуржуалă попутчикĕсем нумайĕшĕ, уйрăмах интеллигентсем, патша правителствин хĕсĕрленинчен хăраса, парти ретĕнчен туха-туха кайнă.

Ленин—çавăн пек самантсенче ревођуцилĕ партисен вĕренсе çитмелĕ, тесе кăтартса панă. Ревођуци çĕкленсе пынă тапхăрта вĕсем наступлени тума вĕренсе пынă, реакци тапхăрĕнче вĕсен отступленине мĕнле тĕрĕс тумалине, вăрттăн ĕçлеме мĕнле куçмалине, вăрттăн ĕçлекен партине мĕнле сыхласа хăвармалине тата çирĕплетмелине, массăсемпе çыхăнса тăрассине çирĕплетме легађнăй майсемпе, тĕрлĕрен легађнăй организацисемпе, уйрăмах массăлă организацисемпе мĕнле усă курмалине вĕренсе çитмеле.

Меңшевиксем паникăла кайăла чакнă, ревођуци çĕнĕрен çĕкленме пултарассине шанмасăр, вĕсем намăса пĕлмесĕр программăн ревођуцилĕ требованийĕсене, партин ревођуцилĕ лозунгĕсене пăрахса пынă, пролетариатăн вăрттăн ĕçлекен ревођуцилĕ партине пĕтерсе хурасшăн, тĕп тăвасшăн пулнă. Çавăнпа та ун йышши меңшевиксене **ликвидатăрсем** тесе чĕнме пуçланă.

Меңшевиксенчен ăрасна, бођшевиксем çитес сывăхри çулсенче ревођуциле çĕкленӳ пулассине, парти массăсене çак çĕнĕ çĕкленӳ тĕлне хатĕрлеме тивĕçлине ĕненсе тăнă. Ревођуцин тĕп задачисене татса паман пулнă. Хресченсем помещиксен çĕрне илеймен, рабочисем 8 сехетлĕ ĕç кунĕ илеймен, халăх курайман патша самодержавине, халăх 1905 çулта унтан кĕрешсе илнĕ пысăк мар политикăлла ирĕклĕхсене те çĕнĕрен пăвса пăрахнăскерне, сирпĕтсе антарман пулнă. Çапла вара, 1905 çулти ревођуцине пуçлантарса йанă сăлтавсем вайрах йулнă. Çавăнпа та бођшевиксем ревођуцилĕ йухăмăн çĕнĕ çĕкленĕвĕ пуласса шанса тăнă, ăна кĕтсе илме хатĕрленнĕ, рабочи класăн вăйĕсене пухнă.

Бођшевиксем ревођуцин çĕнĕ çĕкленĕвĕ пурпĕрех пулассине тата çак факт пирки те шанса тăнă: 1905 çулти ревођуци рабочи класа хăйĕн прависене массăлă ревођуцилĕ кĕрешӳре çĕнсе илме вĕрентнĕ. Реакци çулĕсенче, капитал наступлени тунă çулсенче рабочисем 1905 çулăн çав урокĕсене манма пултарайман. Ленин рабочисен çыравĕсене илсе кăтартнă, çав çырусенче вĕсем, фабрикантсем хĕсĕрленисем тата машкăланисем çĕнĕрен пуçланса кайни çинчен каласа парса, çапла каланă: „Тăхтăр-ха, каллех ак 1905 çул килет!“

Бођшевиксен политикăлла тĕп тĕллевĕ çавах, 1905 çулхийех йулнă—патша йĕркине сирпĕтсе антармала, буржуалă-демократилĕ ревођуцине вĕçне çитермеле, социалисамлă ревођуци патне куçмала. Бођшевиксем çав тĕллев çинчен пĕр минутлăха та манман, массăсем умне ревођуцилĕ тĕп лозунгсене кăларса тăратса пынă: демократилĕ республика, помещиксен çĕрне конфискацилесси, 8 сехетлĕ ĕç кунĕ.

Анчах парти тактики çав-çавах, 1905 çулти ревођуци çĕкленсе пынă тапхăрти пекех, йулма пултарайман. Сăмахран, чи çывăхри вăхăтра массăсене пĕтĕмĕшле политикăлла стачкă йе хĕçпăшаллă восстани тума чĕнме йураман, мĕншĕн тесен ревођуцилĕ йухăм чакни, рабочи клас питех те хытă ывăнни, реакцилĕ классем пысăккăнах вăйланни куç умĕнче пулнă. Парти çĕнĕ лару-тăрува шута илмесĕр тăма пултарайман. Наступлени тăвас тактикăна оборонă тактикипе, вăйсене пухас тактикăпа, кадрсене вăрттăн ĕçлеме куçарас тата парти вăрттăн ĕçлес тактикăпа, вăрттăн ĕçлессине рабочисен легађнăй организацисенче ĕçлессипе çыхăнтарса пырас тактикăпа улăштармала пулнă.

Бођшевиксем ĕнтĕ вăл задачăна пурнăçа кĕртме пултарнă.

„Епĕр ревођуци умĕн нумай çулсем хушши ĕçлеме пĕлтĕмĕр. Пире ахађ мар ĕнтĕ чул пек çирĕпскерсем, тесе йат пачĕç. Социал-демократсем пролетарисен партине туса хучĕç, вăл пĕрремĕш вăрçăлă тапăну ăнăçсăр пулнăшăн хăраса ӳкмĕ, пуçа çухатмĕ, авантурăсем хыççăн ывтăнмĕ“,— тесе çырнă Ленин (Ленин, т. XII, стр. 126).

Бођшевиксем партин вăрттăн организацийĕсене сыхласа хăварассишĕн тата çирĕплетессишĕн кĕрешнĕ. Анчах çав вăхăтрах бођшевиксем легађнăй майсемпе пуринпе те, йарса тытмали—унпа усă курса массăсемпе çыхăнса тăмали тата çав çыхăнува сыхласа усрамали, çапла майпа партине вăйлатмали пур тĕрлĕ легађнăй майпа та усă курни кирлĕ, тесе шутланă.

„Ку вăл пирĕн парти патша йĕркине хирĕç ревођуцилĕ уççăн кĕрешессинчен кĕрешӳн тавра çулĕсем çине, мĕнпур тата пур тĕрлĕ легађнăй майсемпе те—страховой кассăсенчен пуçласа дума трибуни таранах—усă курасси патне çаврăннă тапхăр пулнă. Ку вăл, пире 1905 çулти ревођуцире çĕмĕрнĕ хыççăн, отступлени тунă тапхăр пулнă. Çак çаврăну пире, вăйсене пухса патша йĕркине хирĕç çĕнĕрен уççăн пыракан ревођуцилĕ кĕрешӳве кайма, кĕрешӳн çĕнĕ метачĕсемпе ĕçлеме вĕренсе çитме хушнă“ (СТАЛИН, стенографический отчет XV с“езда, стр. 366—367, 1935 г.).

Сыхланса йулнă легађнăй организацисем партин вăрттăн организацисемшĕн хӳтлĕх пек тата массăсемпе çыхăнса тăмали средствă пулнă. Массăсемпе çыхăну тытассине сыхласа хăварас тесе, бођшевиксем профсойузсемпе тата ытти легађнăй общĕствăлла организацисемпе: пуђнипасен страховой кассисемпе, рабочисен кооперативĕсемпе, клубсемпе тата кулђтурăлла общĕствăсемпе, халăх çурчĕсемпе усă курнă. Бођшевиксем Государственнăй дума трибунипе патша правителствин политикине тăрă шыв çине кăларма, кадетсене тăрă шыв çине кăларма хресченсене пролетариат йенне çавăрма усă курнă. Партин вăрттăн ĕçлекен организацине сыхласа хăварни тата çак организаци урлă ытти пур тĕрлĕ политикăлла ĕçсене йертсе пыни партине унăн хăйĕн тĕрĕс çулйĕрне пурнăçа кĕртсе пыма, ревођуцилĕ çĕнĕ çĕкленӳ тĕлне вăйсене хатĕрлеме май панă.

Бођшевиксем хăйсен ревођуцилĕ çулйĕрне **икĕ фронтра** кĕрешсе, партири икĕ тĕрлĕ оппортунисăма хирĕç: партин тӳррĕмех тăшманĕсене—**ликвидатăрсене** хирĕç тата партин вăрттăн тăшманĕсене—**отзовиссем** тенĕскерсене хирĕç кĕрешсе пурнăçа кĕртсе пынă.

Ленин, бођшевиксем ликвидатăрствăна хирĕç çав оппортунисла йухăм пуçланнă вăхăтран тытăнсах ним килĕшмесĕр кĕрешсе пынă. Ленин: ликвидатăрствă либерађнăй буржуазин партири агентури пулаť, тесе кăтартса панă.

1908 çулти декабĕрте Парижре РСДРП пиллĕкĕмĕш (Пĕтĕм Россиари) конференцийĕ пулса иртнĕ. Çак конференци Ленин сĕннипе ликвидатăрствăна, урăхла каласан, партири интеллигенцин (меңшевиксен) хăшпĕр пайĕ „РСДР Партин хађхи организацине пĕтерсе хума, ăна йепле пулсан та легађнăй рамкăсенче ним формăсăр пĕрлешнипе, çакна партин программине, тактикине тата традицисене уççăнах пăрахнипе илмеле килсен те, улăштарма“ хăтланнине сивленĕ (ВКП(б) в резолюциях, ч. 1, стр. 128).

Конференци парти организацисене пурне те ликвидатăрла хăтланусене хирĕç татăклăн кĕрешме чĕннĕ.

Анчах меңшевиксем конференцин çак решенине пăхăнман, вĕсем ликвидатăрствă çулĕ çине, ревођуцине пăрахас, кадетсемпе çывхарас çул çине ытларах та ытларах шуса анса пынă. Меңшевиксем пролетариат партин ревођуцилĕ программине, демократилĕ республика, 8 сехетлĕ ĕç кунĕ тăвас, помещиксен çĕрĕсене конфискацилес требованисене ытларах та ытларах уççăн пăрахса пынă. Меңшевиксем парти программине тата тактикине пăрахнă, хакпа патша правителствинчен „рабочисен“ тенĕ уççăн, легађнăй партине пурăнма ирĕк илесшĕн пулнă. Меңшевиксем Столыпин режимĕпе килĕшме, унпа майлашса пурăнма хатĕр пулнă. Çавăнпа та ликвидатăрсене тата „столыпинла рабочи парти“ тесе чĕннĕ.

Ревођуцин уççăн тăшманĕсене ликвидатăрсене хирĕç,—вĕсен пуçĕнче Дан, Аксеђрод, Потресов тăнă, çавăнпа пĕрлех вĕсене Мартăв, Троцкий тата ытти меңшевиксем те пулăшса пынă,—кĕрешнипе пĕр вăхăтрах,—бођшевиксем çавăн пекех пытанчăк ликвидатăрсене хирĕç те, хăйсен оппортунисăмне „сулахай“ сăмахсемпе витĕнтернĕ отзовиссене хирĕç те ним килĕшмесĕр кĕрешсе пынă. Отзовиссем тесе бођшевиксем пулнисен пĕр пайне, рабочисен депутачĕсене Государственнăй думăран кайала чĕнсе илме требовани лартнăскерсене тата легађнăй организацисенче ĕçлессине пĕтĕмпех пăрахассишĕн тăнăскерсене, чĕне пуçланă.

1908 çулта бођшевиксен пĕр пайĕ социал-демократла депутатсене Государственнăй думăран кайала чĕнсе илме требовани лартнă. Çавăнтан туха кайнă „отзовиссем“ тени. Отзовиссем хăйсен уйрăм группине туса хунă (Богданăв, Луначарский, Алексинский, Покровский, Бубнов тата ыттисем те), вăл группă Ленина хирĕç, ленинла çулйĕре хирĕç кĕрешме тытăннă. Отзовиссем рабочисен профеçсилĕ сойузĕсенче тата ытти легађнăй общĕствăсенче ĕçлессине татăклăнах йышăнман. Кунпа вĕсем рабочисен ĕçне пысăк сийен кӳнĕ. Отзовиссем партине рабочи класран уйăрса пынă, ăна партире тăман массăсемпе çыхăнусăр хăварса пынă, вăрттăн организацире питĕрĕнсе ларасшăн пулнă, çавăнпа пĕрлех тата партине, легађнăй хӳтлĕхсемпе усă курмали майсемсĕр хăварса, çапни пырса тивмеле çĕре кăларса тăратнă. Государственнăй думăра тата унăн урлă бођшевиксем хресченсем çине влийани пама пултарнине, патша правителствин политикине, кадетсен политикине,—вĕсем ултавлă майпа хресченсене хăйсем хыççăн илсе кайма тăрăшнă,—тăрă шыв çине кăларма пултарнине отзовиссем ăнланман. Отзовиссем ревођуцилĕ çĕнĕ çĕкленӳ вађђи вăйсене пухма чăрмантарнă. Отзовиссем çавăнпа „тӳнтерле ликвидатăрсем“ пулнă—вĕсем легађнăй организацисемпе усă курас майсене пĕтерсе хума тăрăшнă, чăннипе вĕсем партире тăман йышлă массăсене пролетарилĕ йертсе пырассине йышăнмасăр пăрахнă, ревођуцилĕ ĕçе пăрахнă.

Бођшевиксен „Пролетарий“ йатлă хаçат редакцин сарлака канашлăвĕ, отзовиссем хăйсене мĕнле тыткалани çинчен сӳтсе-йавма 1909 çулта пулнăскер, отзовиссене сивленĕ. Бођшевиксем: пирĕнпе отзовиссем хушшинче пĕрри нимĕн те çук, тесе пĕлтернĕ те отзовиссене бођшевиксен организацинчен кăларнă.

Ликвидатăрсем те, отзовиссем те мĕнпурĕ те пролетариатпа унăн партин вакбуржуалă попутчикĕсем çеç пулнă. Пролетариатшăн йывăр вăхăтра ликвидатăрсемпе отзовиссем хăйсен чăн-чăн сăнпитне уйрăмăнах витĕр кăтартнă.

4. Бођшевиксем троцкисăма хирĕç кĕрешни. Партине хирĕçле Августовски блок.

Бођшевиксем пролетарилĕ партин çирĕп çулйĕрĕшĕн икĕ фронтра — ликвидатăрсене тата отзовиссене хирĕç — ним килĕшмесĕр кĕрешсе пынă вăхăтра, Троцкий меңшевик-ликвидатăрсене пулăшса тăнă. Шăпах çак çулсенче Ленин ăна — „Иудушка Троцкий“ тесе йат панă. Троцкий Венă хулинче (Австри) литературăлла группă организациленĕ те „фракцилĕ мар“, чăннипе меңшевикла, хаçат кăларма тытăннă. Ленин унчухне Троцкий çинчен çакăн пек çырнă: „Троцкий хăйне чи ирсĕр карйерис тата фракционер пек тытса пыраť... Парти çинчен лапăлтатаť, анчах хăйне пур ытти фракционерсенчен те ирсĕр тыткалаť“.

Кайрантарахпа, 1912 çулта Троцкий Августри блокăн, урăхла каласан, Ленина хирĕç, бођшевиксен партине хирĕç пыракан пĕтĕм антибођшевикла группăсемпе йухăмсен организатăрĕ пулнă. Çак бођшевисăмшăн тăшманла пулса тăракан блока ликвидатăрсем те, отзовиссем те пĕрлешнĕ, çакăнпа вĕсем хăйсем пĕртăванлă пулнине кăтартса панă. Троцкипе троцкиссем пур тĕп ыйтусем тĕлĕшпе те ликвидатăрла позици йышăннă. Анчах хăйĕн ликвидатăрствине Троцкий центрисăмпа, урăхла каласан, примиренчĕствăпа, епĕ бођшевиксенчен тата меңшевиксенчен те айакра тăратăп, вĕсене пĕр пĕринпе килĕштересшĕн тăрăшатăп, тесе витсе тăнă. Ленин çакăн пирки: Троцкий уççăн ĕçлекен ликвидатăрсенчен ирсĕртерех те сийенлĕрех, тенĕ, мĕншĕн тесен Троцкий „фракцисенчен айакра“ тăратăп тенипе рабочисене улталаť, чăннипе вăл ĕçре пĕтĕмпех меңшевик-ликвидатăрсене пулăшса пыраť. Троцкисăм вăл—центрисăм сарса пыракан тĕп группă пулнă.

„Центрисăм вăл, — тесе çыраť Сталин йулташ, — политикăлла ăнлану пулса тăраť. Унăн идеологийĕ — майлашса пырас идеологи, **пĕр пĕтĕмĕшле парти ăшĕнче** пролетарилĕ интересене вак буржуази интересĕсене пăхăнтарса тăрас идеологи пулса тăраť. Çак идеологи ленинисăмшăн йут идеологи, хирĕçле идеологи“ (**СТАЛИН**, Вопросы ленинизма, стр. 379, изд. 9-е).

Камĕнĕв, Зиновйĕв, Рыкăв çав тапхăрта чăннипе Троцкин вăрттăн агĕнчĕсем пулнă, мĕншĕн тесен вĕсем час-часах Ленина хирĕç Троцкине пулăшса тăнă. Зиновйĕв, Камĕнĕв, Рыкăв тата Троцкин ытти вăрттăн сойузникĕсем пулăшнипе, **Ленин хирĕç пулнă пулин те,** 1910 çулти йанварте Тĕпком пленумне пухнă. Çак вăхăт тĕлне чылай бођшевиксене арĕсленĕ пирки, Тĕпком составĕ улшăннă, пăркаланакан елементсене вара Ленина хирĕçле решенисем йышăнма май пулнă. Çапла, çак пленумра бођшевиксен „Пролетарий“ йатлă хаçатне хупма тата Венă хулинче Троцкий кăларса тăнă „Правда“ хаçата укçа парса пулăшма решени йышăннă. Камĕнĕв çав Троцкий хаçачĕн редакцине кĕнĕ те Зиновйĕвпа пĕрле Троцкий хаçатне Тĕпком хаçачĕ тăвасшăн тăрăшнă.

Ленин хытă тăнипе çеç Тĕпкомăн йанварти пленумĕ ликвидатăрствăна тата отзовисăма сивлесси çинчен постановлени йышăннă, анчах кунта та Зиновйĕвпа Камĕнĕв троцкисла предложенишĕн тăнă, ликвидатăрсем çинчен вĕсене чăн-чăн йатпа калаттарасшăн пулман.

Ленин малтанах каласа систернĕ пекех тухнă: Тĕпком пленумĕн решенийĕсене бођшевиксем кăна пăхăннă, вĕсем хăйсен органне — „Пролетарий“ хаçата—хупнă; меңшевиксем вара ликвидатăрсен фракцилĕ „Голос социал-демократа“ йатлă органне кăларса тăма чарăнман.

Сталин йулташ пĕтĕмпех Ленин позицийĕшĕн тăнă, вăл „Социал-демократ“ хаçатăн 11-мĕш номĕрĕнче йатарласах статйа çырса кăларнă. Çак статйара вăл—троцкисăма пулăшакансем хăйсене мĕнле тыткаланине сивленĕ, Камĕнĕв, Зиновйĕв, Рыкăв сутăнчăкла ĕçсем тунă пирки бођшевикла фракцире пулса кайнă лару-тăрăва пĕтерме кирли çинчен каланă. Статйара черетри задачăсене кăларса тăратнă, вĕсем: пĕтĕм партин конференцине пухас, партин уççăнах тухса тăракан хаçатне кăларса тĕмала тăвас тата партин Россиари вăрттăн практикăлла центрне тăвас задачăсем пулнă, вĕсене кайран Прагăри конференцире пурнăçа кĕртнĕ. Сталин йулташ хăйĕн статйине Бакури комитет решенийĕсем тăрăх çырнă, вăл решенисем пĕтĕмпех Ленинăн тăнă.

Троцкин партине хирĕçле Августовски блокне хирĕç, партине хирĕçле елементсем кăна—ликвидатăрсемпе троцкиссенчен пуçласа отзовиссемпе богостроителсем таранах—кĕрсе тулнă блока хирĕç, вăрттăн ĕçлекен пролетарилĕ партине сыхласа хăварса çирĕплетессишĕн тăракансен партилĕ блокне тунă. Çак блока Ленин йертсе пыракан бођшевиксем тата Плеханăв йертсе пыракан меңшевик-партийĕçсен пĕчĕк ушкăнĕ кĕнĕ. Плеханăв тата унăн меңшевик-партийĕçсенчен тăракан ушкăнĕ, чылай ыйтусем тĕлĕшпе меңшевикла позицисем йышăнса тăнă вăхăтрах, Августовски блокран тата ликвидатăрсенчен татăклăнах уйăрлнă, бођшевиксемпе килĕшессишĕн тăма пуçланă. Плеханăв сĕннине Ленин йышăннă та партине хирĕçле елементсене хирĕç вăхăтлăха блок тунă, ăна Ленин çакнашкал блок партишĕн усăлă, ликвидатăрсене пĕтерекен блок пулса тăнине шута илсе тунă.

Сталин йулташ пĕтĕмпех çак блокшăн тăнă. Çак вăхăтра вăл ссылкăра пулнă. Сталин йулташ ссылкăран Ленин патне йанă çырăвĕнче çакăн пек çырнă:

„Манăн шутпа, блок (Ленин—Плеханăв) тăвас çулйĕр пĕртенпĕр тĕрĕс çулйĕр: 1) вăл, тата вăл кăна, партин чăн-чăн елеменчĕсене пĕтĕçтерме ыйтакан Россиари ĕçĕн чăн-чăн интересĕсемпе килĕшсе тăраť; 2) вăл, тата вăл кăна, рабочи-мексем*) тата ликвидатăрсем хушшинче шăтăк чавса, ликвидатăрсене салатса йарса тата вĕлерсе,—уççăн ĕçлекен организацисене ликвидатăрсен пусмăрĕнчен хăтарас процеса хăвăртлатма пултараť“ (Сборник „Ленин—Сталин“, т. 1, стр. 529—530).

Вăрттăн ĕçлессине уççăн ĕçлессипе пултарулă çыхăнтарса пынипе пула, бођшевиксем рабочисен уççăнах ĕçлекен организацийĕсенче пысăк вăй пулса тăма пултарнă. Çакă вăл, сăмахран каласан, унчухнехи тапхăрта уççăнах пулса иртнĕ тăвата сйесри—халăх университечĕсен, хĕрарăмсен, хапрăк-савăтсенчи врачсен сйесĕсенчи, алкоголе хирĕç тунă сйесри рабочисен группăсене бођшевиксем пысăк влийани панинче палăрнă. Çак уççăнах пулса иртнĕ сйессенче бођшевиксем тухса каланисем политикă тĕлĕшпе пит те пысăк вырăн йышăнса тăнă, вĕсем тухса каланисене çĕршывăн пур вырăнĕсенче те кăмăллана. Сăмахран, бођшевиксен рабочи делегацийĕ, халăх университечĕсен сйесĕнче тухса каласа, пур йышши кулђтурăлла ĕçе те пĕтерсе тăракан патша влаçĕн политикине тăрă шыв çине кăларнă, патша йĕркине пĕтермесĕр çĕршывра кулђтурă тĕлĕшпе чăн-чăн çĕкленӳ пуласси çинчен шухăшлама та май çуккине кăтартса панă. Рабочисен делегацийĕ, хапрăк - савăтсенчи врачсен сйесĕнче тухса, рабочисем ĕçлекен тата пурнакан условисем санитари тĕлĕшпе питех те йывăр пулни çинчен каласа панă, патша йĕркине сирпĕтсе антармасăр хапрăксенчи медицинă ĕçне чăннипех те кирлĕ таран туса пама май çукки çинчен вывăд туса панă.

Бођшевиксем ликвидатăрсене сыхланса йулнă тĕрлĕ усă организацисенчен майĕпенех хĕссе кăларса пынă. Плеханăвăн партилĕ ушкăнĕпе пĕрлĕх фрончĕ туса пырас хăйне йеврĕлĕ тактикă бођшевиксене меңшевиксен чылай рабочи организацийĕсене (Выборгски район, Екатеринослав тата ыт. те) хăйсем майлă çавăрса илме май панă.

Çак йывăр тапхăрта бођшевиксем хăйсен ĕçĕпе уççăнах ĕçлессипе вăрттăн ĕçлессине мĕнле çыхăнтарса пымалли тĕслĕхне кăтартса панă.

*) Мексем—меңшевиксем çинчен кĕскетсе каланă йат.— Ред.

(ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн малали „Чăваш Коммунĕ“ хаçатăн çитес номĕрĕсенче пичетленет).

Сталин хĕвелĕпе çĕкленнĕ,
Пыратпăр хĕрӳ те хастар.
Аслă совет çĕршывĕн
Хавас ачисене çул пар!

В. Лебĕдĕв—Кумач.

В. С. Иванов художник плакачĕ. Государствăн „Искусство“ издателстви Октябĕрти Социалисăмла Аслă ревођуци XXI çул тултарнă тĕле кăларать („Прессклише“).

Çĕршыв патриочĕн çырăвĕ

„Путь Ильича“ колхозри (Кувакинă р.) колхозниксем хăйсен йалĕнчи Шахин йулташран, Хĕрлĕ Çара кайса кĕçĕн командир пулнăскертен, нумай пулмасть çыру илнĕ. Çĕршыв патриочĕ хăйĕн çырăвĕнче çапла çырнă:

„Хаклă йулташсем, колхозниксемпе колхозницăсем! Епĕ, сирĕн „Путь Ильича“ колхоз членĕ, отделени командирĕ, Хасан кӳлли районĕнче пулнă çапăçусен участникĕ, сире красноармейĕцла салам йаратăп.

Йапони самурайĕсем сирĕн колхоз хирĕсенчи лăпкă ĕçсене пăсма шутларĕç, анчах ăна тума вĕсем пултараймарĕç. Пирĕн çĕршыв чиккисем çине тапăнма хатĕрленнĕ чухне, фашисла офицерсем хăйсен салтакĕсене рабочисемпе хресченсен Хĕрлĕ Çарĕнче винтовкăсемсĕр пуçне урăх нимĕнле хĕçпăшал та çук тесе, пире çĕнтерме питĕ те çăмăл пуласси çинчен каласа панă.

Йапони самурайĕсем йăнăшрĕç, Вĕсем пирĕн çине наступлени турĕç, анчах епĕр вĕсене çийĕнчех питĕ те вăйлă отпор патăмăр. Вĕсе хăпарчĕç пирĕн вăйлă сокăлсамођотсем, артиллери тытăнчĕ хирме, танксем тухрĕç. Йапони бандичĕсем хăраса çухалса кайрĕç. Вĕсем ĕнтĕ каçа кăнтăртан та уйăрса илейми пулчĕç. Йапонĕçсене пуçĕпех çĕмĕрсе тăкрăмăр, йулнисем намăслăн тарса пĕтрĕç.

Çапла аркатса тăкрăмăр епĕр тăшмансене.

Хаклă йулташсем, колхозниксемпе колхозницăсем! Ан пăшăрханăр, лăпкă пурăнăр! Мĕншĕн тесен епĕр Йапони самурайĕсене панă урока пур тĕрлĕ бандитсем нумай вăхăт асăнĕç. Пирĕн çине кам та пулин тапăнма хăйсассăн, ун чухне вара епĕр вăл тăшмана хăйĕн территори çинчех çĕмĕрсе тăкăпăр.

Кĕçĕн командир—**Шахин**“.

Уйава хатĕрленеççĕ

Орининăри (Тутаркас р.) туллимар вăтам шкулти вĕренекенсемпе вĕрентекенсем 34 çынтан драмкружок организацилерĕç. Кружока йалти çамрăксем те хутшăнса ĕçлеççĕ. Ку кружока комсомолĕç-учител Никифăрăв йулташ йертсе пыраť.

Комсомол 20 çул тултарнă уйав кунĕнче драмкружок спектакђ лартса параť.

Драмкружок Октябĕр уйавне те вăйлăн хатĕрленет. Кружок членĕсем хăйсен ĕçне йуратаççĕ. Кашни каçах репетицисем туса иртереççĕ, рођсене суфлорсăр выђăма тăрăшаççĕ.

Н. Амурцĕв.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парти комитечĕ коммуниссен сĕнĕвĕсене мĕнле пурнăçа кĕртсе пырат̆

Йалхуçалăхĕн коммунисла аслă шкулĕнчи коммуниссен отчотпа суйлав пухăвĕнче партком ĕçĕнчи ситменлĕхсене хытă критиклерĕç. Пренире тухса каланă йулташсем тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтерме, партилĕ-политикăлă ĕçсене лайăхлатса йама, уйрăмах партгруппăсене йертсе пырассине лайăхлатма татăклă сĕнÿсем парса хăварчĕç. Епĕр коммуниссен сĕнĕвĕсене парткомăн ĕç планне кĕртсе, вĕсене пурнăçлама тытăнтăмăр.

Пухура коммуниссем парти ретне ÿстерессипе çинчен татăклă сĕнÿсем парса хăварчĕç. Çакăн хыççăн епĕр парти резервисемпе ĕçлессине лайăхлатрăмăр. Парти резерви пирĕн сахал мар. Шкулта 98 комсомолĕц, 13 сочувствуйушчи. Сочувствуйушчисемпе канашлусем иртеретпĕр. Вĕсене пур майсемпе те вĕрентме тăрăшатпăр. Вĕсем парти уставĕпе программине вĕренеççĕ.

Отчотпа суйлав пухăвĕ хыççăн отличниксенчен, агитатăр-пропагандиссенчен 19 комсомолĕца парти ретне илнĕ. 10 çынна кандидатран члена куçарнă. 9 çынна сочувствуйушчисен группине илнĕ.

Пирĕн коммуниссем марксисăм-ленинисăма хăйсем тĕллĕн вĕренсе пыраççĕ. Вĕсене ваљљи консуљтаци, семинар организациленĕ. Пирĕн организацинче тăракансем хулари ытти парторганизацисене те пысăк пулăшу параççĕ, пуçламĕш парторганизацисенче 106 çын пропагандис пулса ĕçлеççĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕ пропагандă ĕçне пĕтĕм вăйне хураççĕ. Анчах хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисем (гир-сăран савăчĕ, спирт савăчĕ, макарон хапрăкĕ) пирĕн пропагандиссене ĕçре пулăшмаççĕ. Кăна спирт савăтĕри парторг Пегайĕва йулташ пирĕн пропагандиса вĕренекенсене цехсем тăрăх шырама хушни те лайăх кăтартса парат̆. Пропагандиссем çине çакăн пек пăхни пĕрте те тĕрĕс мар. Вĕсене куллен ĕçре пулăшса пымала. Вĕсен çитменлĕхĕсем çинчен пирĕн парткома пĕлтермеле.

Оборона ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе епĕр тăтăшах ĕçлесе пыратпăр. Шкулта Осоавиахим членĕсем 218 çын. Вĕсем тĕрлĕ кружоксенче оборонă ĕçне вĕренеççĕ. Стрелковăй кружокра вĕренекенсенчен 58 çын Ворошилăв пек тĕл перекенĕн значокне илнĕ. Ытти общĕствăлă организацисем те пирĕн лайăх ĕçлеççĕ.

Пирĕн шкул Мари облаçĕнчи шкулпа ăмăртат̆. Вĕренекенсем хушшинче социалисăмлă ăмăртăва пуçарнă хыççăн вĕренÿ пахалăхĕ лайăхланни палăрат̆. Отличнă тата лайăх паллăпа вĕренсе пыракансен хисепĕ ÿссех пырат̆. Халљхи вăхăтра 62 ударник. Ку шутра 42 коммунис, 17 комсомолĕц, 2 сочувствуйушчи. Партком членĕсем пурте ударниксем. Вĕсем вĕренÿре пример кăтартса пыраççĕ.

Пирĕн ĕçре çитменлĕхсем те сахал мар-ха. Çамрăк коммуниссемпе кирлĕ пек ĕçлейместпĕр. Тата хăшпĕр коммуниссене парти ĕçне çителĕксĕр хутшăнтарнă. 15 коммунисăн парти порученийĕсем çук. Пирĕн комсомолĕцсен çарĕ пысăк. Вĕсене вĕрентсе çитĕнтерес ĕçре ытларах пулăшу памала.

* * *

Пирĕн шкул республикă валљи кадрсем вĕрентсе хатĕрлет. ПСК(б)П хула комитечĕ тата парти Обкомĕ пирĕн парторганизацине конкретлăрах йертсе пыни кирлĕ. Ку таранччен епĕр ПСК(б)П Обкомĕнчен тивĕçлĕ пулăшу курман. ПСК(б)П Обкомĕн кивĕ руководстви пулăшас вырăнне, политикă йенчен шанчăксăр çынсене пирĕн шкула лартса тухнă. Буржуалă националиссен общĕствин оргкомитет членĕнче тăнă Алексейĕва, ПСК(б)П Обкомĕн йалхуçалăх пайĕн пуçлăхĕнчен кăларнă хыççăн, йалхуçалăхĕн коммунисла аслă шкулĕн директăрĕ туса хунă. Паллах, ку çынăн шкулта нимĕнле авторитет та çук. Вăл вĕренÿ дисциплинине те çирĕп тытса пыма пултараймаст̆. П. Г. Григорйĕв та çавăн пекех буржуалă националиссен общĕствинче тăнă.

Пирĕн шутпа, парти кадрĕсем хатĕрлекен шкулта партишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлекен, халăх тăшманĕсемпе кĕрешес ĕçре тĕрĕсленнĕ çынсем ĕçлемеле. Шкула çакăн пек çынсемпе çирĕплетме ыйтатпăр епĕр ПСК(б)П Обкомĕпе хула комитетĕнчен.

Краснов.
Партком çекретарĕ.

Райком тата унăн хаçачĕ

Çĕмĕрле райкомĕ „Социалисăмлă ĕç“ хаçат редакцине пулăшманни, редакцине çурт тупса паманни çинчен пĕрре кăна мар çырнă. Çĕмĕрлери пек редакцисем пирĕн республикăре пĕрре çеç мар, вĕсем чылай. Трак районĕнчи „Коммунисăм çулĕпе“ хаçат редакцийĕ темиçе çул хушши районри учреждениcен коридорĕсенче ĕçленĕ хыççăн, çĕрĕç пай çурчĕн пĕр пÿлĕмне вырнаçнăччĕ. Анчах редакцин кунта та ĕç ăнмарĕ. Парти райкомĕ ирĕк панипе, халĕ редакцине çĕрĕç пайĕнчен хăваласа кăларнă, типографине вырнаçтарнă. Кунта редакцине ĕçлеме услови çук. Пĕр пĕчĕк пÿлĕм. Унта пĕр сĕтел, çав сĕтел тавра типографи директăрĕн, редакцин тăватă сотрудникĕсен ларса ĕçлеме тивет. Акă ĕнтĕ, ĕçле, лайăх хаçат кăлар çакăн пек условире!

Çавăн пекех, Сĕнтĕрвăрри районĕнче те „Ударник“ хаçат редакцине типографи çуртне вырнаçтарнă. Типографи директăрĕ ĕçпе пыракан йалкорсене редакцине кĕртмест. „Халĕ пирĕн пата йалкорсем çÿреми пулчĕç“, тет редакци сотрудникĕ Данилăв йулташ.

Çак асăннă райкомсем хăйсен хаçачĕсем çине большевикла пăхмаççĕ, вĕсем парти Тĕпкомĕн февраљ-мартри пленумĕ кăтартса панине пурнăça кĕртмеççĕ. Редактăра, ытти сотрудникĕсене ларса ĕçлеме вырăн çук пулсан, ĕçйалкорсене редакцине кĕме чараççĕ пулсан, ун пек редакцин мĕнле авторитет пултăр?

Парти райкомĕсен хăйсен хаçачĕсене пур йенчен те пулăшмала. „Хаçатсăр пурăнма, ĕçлеме, йертсе пыма май çук“ тенине ăнланса илме, хаçатсене йертсе пырасси çинчен парти кăтартса панине пурнăçа кĕртме вăхăт ĕнтĕ. Парти Тĕпкомĕ кашни уйрăм хаçатăн пурнăçĕпе нушисене, унăн ĕçĕсем мĕнле пынине пĕлсе, редакцисене ĕçлеме пулăшат̆. Райкомăн пĕр хаçат, ăна йертсе пыма, пулăшма кашни райкомăн вăй та, вăхăт та çителĕклĕ.

Ку çеç мар, районти хаçатсенче ĕçлекен йулташсем парти райкомĕсем хăйсене вĕрентменни, парти, совет, хуçалăх активĕсене хаçат ĕçне хутшăнтарма пулăшманни çинчен те пăшăрханса калаççĕ. Сăмахран, Трак райкомĕн çекретарĕсенчен пĕри те хаçата валљи пĕр статйа та, пĕр заметкă та çырса паман.

Чăваш облаç парторганизацин XIX-мĕш конференцийĕ райкомсене хаçатсене йертсе пырассине, вĕсене ĕçре пулăшассине вăйлатма хушса хăварчĕ. Райкомсен конференци решенине пурнăçа кĕртсе, хăйсен хаçачĕсем çине большевикла пăхмала. Хаçатăн пропагандăлă, агитацилĕ, организатăрлă роље ÿстерессипе, хаçат тавра автăрсен коллективĕ пысăк пуласси, йулашкинчен, хаçатăн пĕтĕм авторитечĕ редакцинчен çеç мар, райкомран та килет. Районри хаçат—парти райкомĕн органĕ, ăна райкомăн йертсе пымала, унăн пулăшмала.

Р. Шашков.

Пренире сахал калаçрĕç

Шупашкарти йалхуçалăх рабфакĕнче комсомол организацин отчотпа суйлав пухăвĕ окт̆абĕрĕн 21-мĕшĕнче пулса иртрĕ.

Иртнĕ çул суйланă комитетра пурĕ те пĕр çын çеç йулнă. 33 комсомолĕцран пренире 8 çын çеç тухса калаçрĕç.

ПСÇЛКС Тĕпкомĕн инструкцийĕ тăрăх отчот пирки резољуци йышăннă хыççăн тин комитет суйламала. Кунта çак йĕркене пăхăнмарĕç, пренисем пĕтнĕ хыççăн резољуци йышăнмасăрах комитет членне суйлама кандидатсем тăратма пуçларĕç. Суйлав инструкцине сасăлама пуçличчен комсомолĕцсене вуласа памарĕç. Комсомол хула комитечĕн представителĕ Бочкарйовă йулташ çак йăнăшсене курса тăрсах нимĕн те асăрхаттармарĕ.

Й. Сигай.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Хасан кÿлли патĕнчи çапăçусенче пулнă љотчик лейтенант Н. И. Лысиков йулташ. Вăл Ленин йачĕпе тăракан Çар-Политикă академинче вĕренет.

А. Йоселевич фото-ÿкерчĕкĕ („Пресcклише“).

Çамрăк организацисене пулăшмала

ПАТĂРЙЕЛ. (Хамăр корр.). Районра комсомол пуçламĕш организацийĕсем çамрăк комсомолĕцсемпе йапăх ĕçлеççĕ. Çамрăк комсомолĕцсене уйрăм порученисем парса ĕçе йавăçтармаççĕ. Çак ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе комсомол райкомĕ те пулăшмаст̆.

— Епĕр комсомола çĕнĕрен членсем илсе колхозра пуçламĕш организаци турăмăр, анчах комсомол райкомĕ йенчен тивĕçлĕ пулăшу курмарăмăр,—тет „Правда“ колхозри комсорг Кокшин йулташ.

Александрăвкăри шкул çумĕнче иртнĕ çулта пуçламĕш организаци тунă. Çак çамрăк организацине ĕçре пулăшса пыман пирки вăл саланса кайас патнех çитнĕ. Çавăн пекех ытти çамрăк организацисене те комсомол райкомĕ тивĕçлипе пулăшса пымаст̆.

Окт̆абĕр уйавĕ умĕнхи ăмăрту

Ăмăртса ĕçлеççĕ

Патăрйел. Аслă Окт̆абĕр уйавĕ çывхарса килет. Районри уйрăм колхозсем уйава пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Акă, Кивĕ Ахпÿртри „РОКК“ колхоз уйав умĕнхи ăмăртăва хутшăннă май, авăн çапса пĕтерчĕ. Государствăна тырă парса татрĕ.

Колхоз Окт̆абĕр уйавĕ тĕлне тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе пама хатĕрленет. Кашни ĕçкунĕ тăрăх 8 килограм тĕштырă тата 60 пус укçан валеçĕнет.

„РОКК“ колхоз Кирăв йачĕпе тăракан колхозпа ăмăртат̆. Икĕ колхозĕнче те Окт̆абĕр уйавне йалхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçленипе кĕтсе илес тесе кĕрешеççĕ. „РОКК“ колхоз çитес çулти вăйлă тырпулшăн та кĕрешÿ пуçарса пырат̆. Халљ колхозри бригадăсенче уйа тислĕк кăларас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Уйа тислĕк кăларас çĕрте П. Старанăв колхозник нормăна 250 процент таран тултарса пырат̆.

Н. Квасăв.

Ĕçри хастарлăх

Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан савăтри рабочисем пĕрпĕрин хушшинче социалисăмлă ăмăртăва сарса йана май, производствă планне тата ĕç тухăçлăхне хăпартсах пыраççĕ. Иртнĕ уйăхсенче плана 150 процент тултарса ĕçленĕ К. Йефимăв йулташ халљхи вăхăтра 200—230 процент тултарат̆, окт̆абĕрĕн 20-мĕшĕнче вăл нормăна 230 процент тултарнă. Ленин йачĕпе тăракан бригадă членĕ В. Куçмин йулташ та йулашки вăхăтра лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлет. Нормăна тултарайман Калентйĕв йулташ окт̆абĕрĕн 20-мĕшĕнче плана 141,9 процент тултарнă.

Анчах савăт руководителĕсем рабочисен ÿссе пыракан хастарлăхне татах та çÿлерех хăпартас тĕлĕшпе йапăх ĕçлеççĕ-ха. Хăшпĕр рабочисене халĕ те спецовкă паман. Йăвăр ĕççенче ĕçлекенсене кашни кун çуршар литр сĕт памала, иккĕмĕш уйăх ĕнтĕ рабочисем сĕт илеймеççĕ. Столовăй та йапăх ĕçлет.

И. Федăрăв.

Типографинчи стаханăвĕцсем

Шупашкарти I-мĕш № типографинчи рабочисем хушшинче Окт̆абĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăрту сарăлсах пырат̆. Чылай рабочисем хăйсен кулленхи нормисене 150—200 процент таран тултарса ĕçлеççĕ.

Йулашки вăхăтра уйрăмах переплотнăй цехри стаханăвĕцсем паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеме пуçларĕç. Акă, Н. Йелизарăвă, Н. Шелыванăвă йулташсем кашни кунах нормăна 384—364 процент, Т. Филиппăва—256 процент., Т. Ландышĕвă—231,7 процент, В. Филиппăвă й.—231,7 процент тултараççĕ. Родионăвăпа Сидйаковă йулташсем те икшер нормă тултарса ĕçлеççĕ.

Лайăх тĕслĕх кăтартакансем ытти цехсенче те пур. Цинкографинчи çамрăк стаханăвĕц Г. Грачков йулташ сменăра 1128 квадрат цинкокартинă ÿкерсе плана йаланах ытлашшипе тултарат̆.

М. Григорйĕв.

Чылай ĕçсем тунă

ÇĔМĔРЛЕ. „Большевик“ савăт дирекцийĕ хĕллене хатĕрленес йенĕпе чылай ĕçсем тунă. Производствă йенĕпе савăт корпусне механически тата електричествă цехĕсене пыракан пăс провочĕсене йусанă. Цехсен алăкĕсемпе чÿречисене кантăксем лартнă, котељнăй, електровăй паракан цехсенче те хĕллехи çанталăкра йĕркеллĕ ĕçлеме майсем тунă, фонарсем хатĕр. Шыв пыракан трубасене йусаса пĕтернĕ.

Çавăн пекех рабочисен хватерĕсене йусас йенĕпе те чылай ĕçсем тунă. 15 хватере пур йенчен те йусанă, ытти çуртсенче чÿречесем лартнă, кăмакасене, плитасене йусаса шуратнă, алăксене, урайсене те йĕркеленĕ. Чылай çĕрте вылљăхсем хупмалли сарайсене, вутă хумалисене, нÿхрепсене т. ыт. йусаса хатĕрленĕ.

Н. Иваницкий.

Виçшер нормă тултарассишĕн кĕрешеççĕ

Шупашкарти стройкăри чылай бригадăсем халљхи вăхăтра иртнĕ уйăхринчен лайăхрах ĕçлеме пуçларĕç. Плотниксен Сивкин йулташ йертсе пыракан бригади çент̆абĕр уйăхĕнче плана 200—250 процент тултарнă пулсан, окт̆абĕр уйăхĕнче 250—280 процент тултарат̆. Çак уйăхăн малтанхи çурри уйăх планне бригадă 277 процент тултарнă.

Иашманăв йулташ бригадинче (бригадăра 11 çын) нормăна тултарайманнисем çук. Бригадă членĕсем пурте техминимум кружокне вĕренме çÿреççĕ. Халљхи вăхăтра çĕнĕ клуб тунă çĕрте ĕçлесе, пурте нормăсене 150 процентшар тултарса пыраççĕ. Çак ĕçре ĕçлекен Волкăв, Маркитанăв, Сулейманăв, Кассанăв йулташсен бригадисем те кулленхи плана ытлашшипех тултараççĕ.

Сивкин йулташ бригади членĕсем Окт̆абĕр уйавне плана 300 процент тултарнипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ.

В. Дмитрийĕв.

МАРИНĂ РАСКОВĂ

ДНЕВНИКРЕН

Çент̆абĕрĕн 25-мĕш. Валентинă анса ларма шутларĕ. Расходнăй бакра бензин 30 минутлăх кăна йулнă. Пирĕн айра шурлăх. Командиртан приказ илетĕп: çĕре сикмеле! Анса ларнă чухне самољот çĕр çине сăмсапа тăрăнас пулсан, вара манăн, малти кабинăра ларса пыракан штурманăн ыррине кĕтмели çук.

2.000 метр çÿллĕшĕнчен сикетĕп. Парашÿт куполĕ хыр тăррине çакланса ларат̆. Охотник çĕççине кăларатăп та, стропасене касса йаратăп, хам йăвăç тăрăх çĕр çине анатăп. Йĕри-тавра сĕм вăрман. Тĕттĕм пулса çитиччен вăхăт пĕр сехете йахăн йулат̆.

Вăрманта пĕр-пĕччен... Сасартăк пăшал сасси. Тавçăрса илетĕп: ман хĕрсем самољот хăш вырăна анса ларнине пĕлтерме переççĕ. Кĕсйерен спичкă кăларса чĕртетĕп. Компаса пăшал сасси илтĕннĕ йенне майлаштарса лартатăп. Тĕттĕме витĕр кайма шут çук,—çĕр каçма вырăн шырас пулат̆. Шоколад таткине çисе йаратăп. Типĕ вырăн тупса выртатăп. Ăшă, канлĕ. Епĕ хам пĕр минутлăха та иккĕленместĕп: пăшал сасси илтрĕм пулсан, самољот чиперех анса ларнă, манăн тантăшсем те сывах.

Çент̆абĕрĕн 26-мĕш. Тул çутăлачченех хытă çывăрнă. Вырăна сăнатăп. Йĕри-тавра сĕм вăрман. Çула тухас пулат̆. Пыратăп. Малтанхи утăмсенченех сисетĕп, çири тумтирсем малала кайма питех те хытă кансĕрлеççĕ. Çитменнине тата ĕçес килет. Йăвăç çулçисем çинчи шыв тумламĕсене çуласа пăхатăп, анчах кун пек туни ĕçни пулат̆-и вăл? Кăнтăрла тĕлне кăна пĕр çĕрнĕ йăвăç айĕнче шыв тупатăп. Антăхса кайсах ĕçетĕп. Каллех малала кайатăп.

Хĕвелтухăç йеннеле темиçе çĕр метр кайсан, сасартăк пăшал сасси илтетĕп. Каллех компăса тĕл туса йĕркелетĕп — пăшал сасси кăнтăр йенчен илтĕннĕ мĕн. Çĕнĕ курс тăрăх пыратăп. Пĕчĕккĕн хуçса шоколад çийетĕп. Пĕр кун хушшинче çур плита çисе йанă. Майĕпен пыратăп. Сехетре 100—300 метртан мала тума çук. Тĕттĕм пулаччен обйазателнă уçланкăна тухас пулат̆. Пыратăп, пыратăп, ман уçланкă çаплах çук. Кăнтăр-хĕвеланăç йенче упасем улаççĕ. Уçланкăна пурĕ-пĕрех çитеймерĕм. Вăрмантах çĕр каçма шут тытрăм.

Çент̆абĕрĕн 28-мĕш. Пыма çăмăлтарах пулчĕ. Епĕ тайгара мĕне те пулса вĕрентĕм ĕнтĕ. Ман умра пĕчĕк çырма, урлăшĕ виçĕ метр. Йăвăçсем сĕтĕрсе пыратăп та, вĕсене çырма урлă хурса, каçса кайатăп. Çырма урлă каççанах— шурлăх. Çĕр путакан вырăна пырса тухатăп. Кун çак вырăна сăнанипех иртсе кайат̆.

Çент̆абĕрĕн 29-мĕш. Йаланхи пекех тул çутăлнă тĕле вăранатăп, тăхăнса çывăрнă ăшă тумтирсене хыватăп та, пĕр кĕпе вĕççĕн кăна малала çул тытатăп. Кăнтăрла умĕн чиперех самољот моторĕ кĕрленине илтрĕм.

Каç пулса çитнĕ тĕле пĕр пысăк шурлăх патне пырса тухатăп. Кунта ларакан сопкăсемпе сăртсем тăрăх, епĕр çак вырăнтан вĕççе иртнине чухласа илетĕп. Халĕ ĕнтĕ çул тытма ансатрах. Анчах... „Ир каçран ăслăрах“, ыран ирччен кĕтме шутлатăп.

Çент̆абĕрĕн 30-мĕш. Çĕнĕ решени йышăнатăп: вырăна тĕрĕслес пулат̆. Епĕ парашÿтпа сикнĕ вырăнтан инçех мар йур выртакан сăрт пур, çав сăрта курас пулат̆.

Паллă, епĕ хама кирлĕ йеннеле пымастăп. Мана пăшал сасси улталарĕ пулмала, анчах ăçтала каймала—пĕлместĕп... Шурлăхсем, тĕмескесем тăрăх пыратăп. Унтсене шыв витнĕ, урасем йĕпенчĕç. Вут хурсан аван пулмала, анчах мĕнпе? Йĕри-тавра шурлăх. Тĕмескесем ытларах вырăна суйласа илетĕп. Пайан хытă çĕрте çывăрма тивет. Асăрхамасăр йарса пусатăп та, епĕ шурлăха кĕрсе ÿкетĕп.

Окт̆абĕрĕн 1-мĕш. Каçхине питĕ сивĕ пулчĕ. Вăранатăп—тăм ÿкнĕ. Ман унтсем шăнса ларнă—урасем те кĕмеççĕ: шак хытă, хут̆ те пуртăпа кас. Унтсене шыва чиксе йĕпетмеле пулчĕ. Çакăн пек хăтланса вăхăт пĕр сехет хушши иртрĕ. Унтсем каллех çемĕçрĕç те, урана тăхăнса лартрăм. Тĕмескерен тĕмеске çине пусса утатăп. Лачакалă шурлăхсем ку вырăнта çăра та çÿлĕ, пилĕк таран курăкпа витĕнсе ларнă. Ура айĕнче мĕн пуррине пăхмасăр утса пыратăп. Кĕтмен çĕртен мăй таран шыва анса кайатăп. Шыв пăр пек сивĕ. Çакăнта вара пирвайхи хут епĕ тайгара пĕр-пĕччен пулнине туйса илтĕм. Кунта ĕнтĕ никам та килес çук, хăтарас çук. Хам тĕллĕн çăлăнас пулат̆. Ишме пуçларăм. Аран-аран ишсе тухрăм. Çак киревсĕр вырăнтан мĕнле те пулсан инçетерех пăрăнас пулат̆. Ман çинче пурте йĕпе. Анчах шурлăхра мĕнле типĕнес тетĕн-ха? Мĕн каç пулаччен кунĕпех типĕнтĕм. Анчах ку çурма инкек кăна-ха. Чи кирли вăл—манăн шоколад пĕтсе килет. Брÿки кĕсйисене хыпашлама пуçларăм, манăн пысăк савăнăçăма, кĕсйере хутпа чÿркесе хунă 7 мйатнăй лепешкă тупатăп. Хĕвел анса ларнă çĕре пĕтĕмпех типсе çитрĕм. Малала тата пĕрик километр тума пулат̆ ĕнтĕ. Анчах та, çĕнĕрен тепĕр хут шыва кĕрес мар тесе, ăçта типĕннĕ, çав вырăнтах çĕр каçма шутларăм.

Окт̆абĕрĕн 2-мĕш. Шурлăх çĕр каçаччен тата ытларах шăнса ларнă. Вăхăта çухатма кирлĕ мар, кайас пулат̆. Кăнтăрла тĕлне сопкăсен хысĕнчен çавăрăнса тухатăп. Инçетре йур выртакан сăрт лайăххăнах курăнат̆. Паллă, çак сăрт вăл, епĕ самољот çинчен сикнĕ вырăнти сăрт. Каллех çак сăрт патне çул тытатăп. Шурлăхсем хушшинче вăрман утравĕ патне пырса тухатăп. Йăвăçсем айĕнче шырама пуçларăм. Урра! Кăмпасем! Чăн-чăн çимели ыră кăмпасем!

Вут хума тытăнтăм. Спичкă чĕртрĕм те, пуçтарнă йăвăç хупписене патнерех сиктертĕм, спичкăсене йунашар хутăм. Пуçтарса хунă йăвăç хупписемпе курăксене маншăн кĕтмен çĕртен питĕ хăвăрттăн вут хыпса илчĕ. Епĕ мĕн пулнине тавçăрса илме ĕлкĕриччен вутра манăн спичкă коробки те çунса карĕ. Чăн-чăн тайга пушарĕ пуçланчĕ. Мĕнле те пулсан хăвăртрах шурлăха тухас пулат̆. Вут хунă вырăнтан пĕр 100 метр пек çеç кайнăччĕ, сасартăк ман тĕлтенех 2000 метр çÿллĕшĕнче самољот вĕççе пынине куратăп. Вăл тÿррех вут хунă вырăн патне вĕçет. 600 метр çÿлĕшне анчĕ те, пушар тухнă вырăнта темиçе хутчен çавăрăнчĕ. Свитера, егерски тумтире хыватăп, çаксене пурне те шурлăх çине сарса хуратăп, хам пурçăн кĕпепе, шурлăх çине выртатăп. Анчах мана самољот çинчен курмарĕç.

Каллех çурçĕр-хĕвеланăç йенне çул тытса йур выртакан сăрт патне кайатăп. Халљ ĕнтĕ тулли шанăçпах çĕр каçма выртрăм: самољот вут тухнине, тĕтĕме курчĕ пулсан, ыран пурĕ-пĕрех тепĕр хут вĕççе килме пултарат̆, вара мана тупаççĕ. Çывăрас умĕн пĕр мйатнăй лепешкă çисе йатăм.

Окт̆абĕрĕн 3-мĕш. Ирхине каллех çул çине тухатăп. Икĕ километр сарăлса выртакан путлăхлă вырăн тавра çавăрăнса пĕр кун хушши иртсе карĕ. Хам шутланă тăрăх, епĕ парашÿтпа аннă вырăнти сопкăсем патне пырса тухрăм, икĕ самољот куртăм. Иккĕшĕ икĕ йеннеле вĕçеççĕ. Паллах, вĕсем çĕр çинче мĕскер те пулин шыраççех.

Часах инçетре пулин те, уççăнах кĕрленĕ сасă илтрĕм. Тискеррĕн кĕрленĕ сасă çумне туратсене хуçса пынă сасă хутшăнат̆. Епĕ питех те ывăннă. Сасартăк пилеш тĕмески куратăп. Пилеше мĕн пултарнă таран татса тутăр çине чĕркетĕп, кĕсйене чикетĕп. Тăраниччен çийетĕп—питĕ уçă апат. Йĕри-тавра упасем пуррине пăхмасăр, çакăнтах çĕр каçма шут тытатăп. Çĕркаçа чуна çурас пек рыççем кăшкăраççĕ.

Окт̆абĕрĕн 4-мĕш. Шоколад пĕтет. Пурĕ те çинçе таткă кăна йулнă. Анчах ун вырăнне манăн пилеш пур, кљуквă çырлисем тĕл пулаççĕ, çĕмĕрт пек хура çырла. Нимĕн йĕркесĕр ĕçес килет.

Кĕтмен çĕртен ман тĕлтен йăвăр самољот вĕççе пыни курăнчĕ. Вăл та, епĕ пыракан йеннелех вĕçет. Инçетре икĕ хутчен çавăрăнса илет те, кайала вĕççе кайат̆. Пăртак вăхăт иртсен тата тепĕр самољот курăнат̆. Вăл та çавăнталах вĕçет, пĕрре çавăрăнса илет те, таçта кайса çухалат̆. Йурат̆. Халĕ ĕнтĕ епĕ пĕлетĕп: „Родина“ самољота тупнă. Самољот патне çул тытатăп.

Питĕ ĕçес килет. Çитменнине тата упа пырса тухрĕ, чылайах пысăкскер. Тÿрех ман çине пырат̆. Ман пата çитесси вуншар утăм йулсан, упа кайри урисем çине тăрат̆, вăл кĕрешÿ пуçланасса кĕтет. Анчах та манăн упапа кĕрешсе тăрас кăмăл çук. Перетĕп, упа хăвăрттăн хăйĕн çулне улăштарат̆, тарма пикенет.

Окт̆абĕрĕн 5-мĕш. Ыйăх витĕр пилĕк хутчен пăшал сасси илтетĕп. Вăранатăп, куçа уçатăп, ĕненес килмест. Çаксем мана пурте тĕлĕкре кураннăн туйăнаççĕ. Хам хăлхасене те ĕненместĕп. Тĕлĕк пулĕ ку тесе шутлатăп. Йулашки шоколад таткин çуррине çисе йаратăп. Çур сехет иртет. Каллех пилĕк хутчен пăшал сасси илтетĕп. Пăшал сассине хирĕç çул тытатăп. Пăшал сассисем епĕ пыракан çул çинче. Тепĕр минутран тата виçĕ хутчен пăшал сасси илтĕнет.

Тата кăштах тăрсан каллех йăвăр самољот вĕççе иртет. Вăл та ĕнер самољотсем вĕççе пынă вырăнах вĕçет.

Епĕ халĕ ĕнтĕ пĕр минутлăха та иккĕленместĕп: „Родина“ самољота тупнă, епĕ самољот патне тÿрех пыратăп. Тата пăшал сассисем илтĕнеççĕ. Хам çула пăшал сассисем тата вĕçекен самољотсем май тытатăп.

Пилеш нумай çийетĕп. Запасра мйатнăй лепешкăсем çурри патнех тата шоколад таткин пĕр чĕрĕкĕ.

Вăрман кĕтессисенчен çавăрăнса тухрăм та, куратăп: хĕвел çинче „Родина“ самољотăн кĕмĕл тĕслĕ стабилизатăрĕ çутăлса ларат̆. Питĕ хытă савăнтăм. Пĕтĕм йулашки вăйа пухса самољот патне карăм. Айакранах куратăп: самољотран инçетре мар çынсем кускалаççĕ. Мана курмаççĕ-ха вĕсем. Пуçа шухăш пырса кĕрет: неушлĕ вĕсем самољот патĕнчен кайма тухнă? Перетĕп, анчах нимĕнле ответ та çук. Вара мĕн вăй çитнĕ таран чупма тытăнтăм. Часах çынсем самољот патнеле пынине куртăм. Самољот тăракан вырăнтан пĕр километр патне айаккарах уççăнах Полинă тата арçынсен сассине илтрĕм. Кунта вара хамăн йулашки патрона персе йатăм. Полинă сассине илтрĕм. Вăл кăшкăрат̆: „Маринă килет! Вăл пĕччĕнех килет, ăна илсе килмеççĕ!“ Мана хирĕç чупма тытăнчĕç. Пуринчен малтан Тихăнăв доктăр пырса çитрĕ. Врач парашÿтис пулни мана тĕлĕнтерсех йачĕ. Епĕр, пĕр-пĕрине патне чупса пырса, ыталашса илтĕмĕр, чуп турăмăр. Çакăн пек вара пуринпе те. Хăшпĕрисем, савăннипе макăраççĕ, вăл шутра комиссар Литвиненко йулташ та. Епĕ самољот патне пытăм, хам кабинкăна тĕрĕслерĕм. Пурте вырăнта, нимĕн те ванман. Валентина машинăна питĕ ăста антарса лартнă, манăн сикме те кирлĕ пулман...

Çĕрулми хатĕрлевĕ

Окт̆абĕрĕн 26-мĕш кунĕ тĕлне Мускава йама çĕрулми планпа пăхнинчен 37,7 процент хатĕрленĕ, тийесе йамали плана 28,1 процент тултарнă.

Çĕрулми хатĕрлевĕ Çĕрпӳне Шупашкар районĕсенче пит начар пырат̆. Çĕрпӳри хатĕрлев пунктне çак икĕ районран окт̆абĕрĕн 26-мĕшне пĕтĕмпе те 13,6 тоннă анчах çĕрулми пынă.

Вармар районĕнче окт̆абĕрĕн 26-мĕшĕнчĕ пĕр кунта государствăна çĕрулми 86 тоннă панă, пĕтĕм плана 50 процент ытларах тултарнă.

Хĕрлĕ Чутай районĕ окт̆абĕрĕн 26-не плана 62 процент тултарнă.

Улатăрти хатĕрлев пункчĕ хăйĕн планне 20 процент çеç тултарнă. Ку пункт çумне çирĕплетнĕ Пăрачкавпа Кувакинă районĕсем пит начар ĕçлеççĕ.

Канашри хатĕрлев пункчĕ те хăйĕн планне 19 процент çеç тултарнă. Пункт управљайушчийĕ Петров окт̆абĕрĕн 25-мĕшĕнчен вара ĕçе тухман, вăл ăçта кайни те паллă мар. Çакă вăл хатĕрлев аппаратĕнчи хăшпĕр работниксем çав тери пăсăлса кайнине кăтартат̆. Канаш пункчĕ çумне çирĕплетнĕ Канашпа Тăвай районĕсем çĕрулми хатĕрлес тĕлĕшпе çаплах начар ĕçлеççĕ.

Елĕк районĕ чи кайри районсемпе пĕрле пырат̆, вăл хăйĕн çĕрулми хатĕрлемелли плана мĕнпурĕ те 12 процент çеç тултарнă.

Ишлей районĕ лайăх ĕçлесе, бољшевиксен партипе совет правительствин кăтартăвне вăхăтра пурнăçа кĕртрĕ. Ку район çак икĕ кун хушшинче çĕрулми хатĕрлев планне тултарчĕ. ПСК(б)П Ишлей райкомĕ массăна мобилизацилеме пултарнине кăтартрĕ. Ытти районсен те Ишлей районĕнчи пекех массăна мобилизацилесе, çак кунсенчех çĕрулми хатĕрлевне тултарас пулат̆.

— О —

Çĕрпӳри йалхуçалăх выставки

Окт̆абĕрĕн 29-мĕшĕнче Çĕрпӳре районри йалхуçалăх выставки уçăлат̆. Выставкă—кăçалхи йалхуçалăх çулĕнче районри колхозсемпе колхозниксем тунă çитĕнӳсене тата районри колхозсем 1939 çулти август уйăхĕнче Мускавра уçăлакан Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкине мĕнле хатĕрленнине кăтартса памала.

Выставкăна районри пур колхозсем те хутшăнаççĕ. Йалхуçалăх выставки уçăлнă кун лашасен чупăвĕ пулса иртет. Ку чупăва темиçе районри колхоз лашисем хутшăнаççĕ. Мала тухнисене премисем параççĕ.

— О —

Вулакансен йышĕ ӳсет

Куславкка районĕнчи библиотекăра вулакансен йышĕ ӳссех пырат̆.

1938 çулти йанварĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа окт̆абĕрĕн 1-мĕшĕ тĕлне библиотекă 14.430 кĕнеке вулама панă. Вулакансен шучĕ 11.980 çынна çитнĕ. **Н. Анисимăв.**

Пункт организациленĕ

Çĕрпӳ районĕнчи „Ĕмĕт" колхозра сурăхсене искусственнăй майпа пĕтĕлентермели пункт организациленĕ. Пунктра кирлĕ хатĕрсене мĕн пурĕ 2 пин тенкĕлĕх туйаннă. Халĕ пунктра 740 сурăха пĕтĕлентернĕ.

А. Иванов.

Лайăх ĕçлекен радиокружоксене премиленĕ

Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти ийунĕн 7-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, Шупашкар хулинче августăн 23-мĕшĕнчен пуçласа çент̆абĕрĕн 10-мĕшне çитиччен республикăри 2-мĕш радиовыставкă пулса иртрĕ.

1937 çулта пулса иртнĕ республикăри 1-мĕш радиовыставкăпа танлаштарсан кăçалхи 2-мĕш радиовыставкă радио кружокĕсемпе радиона йуратакансен йышĕ ӳснине тата кăçалхи выставкă пысăк вырăн йышăнса тăнине кăтартрĕ.

Иртнĕ çулхи выставкăна республикăри районсенчен радио кружокĕсемпе радио ĕçне йуратакансенчен мĕн пурĕ 32 експонат килнĕ пулсан, кăçалхи выставкăна 42 експонат килнĕ. Кăçалхи выставкăна килнĕ експонатсем иртнĕ çулхи експонатсенчен пысăк уйрăмлăхне, уйрăмăнах експонатсене техникă тĕлĕшĕнчен пысăк пахалăхпа тунине палăртмала.

Кăçалхи выставкăна 18 кун хушшинче 2709 çын пырса курнă. Выставкă комиссийĕ експонатсен пахалăхне пăхса тухнă хыççăн пĕрремĕш премийе Куславкка районĕнчи Варасăрти туллимар вăтам шкулти радио кружокне 300 тенкĕ укçан, иккĕмĕш преми Куславккари вăтам шкулти радио кружокне 250 тенкĕ тата виççĕ кружока 100-шер, 50-шар тенкĕ укçапа, пĕр кружока „Радио-фронт" журнал çырăнса парса премиленĕ.

Радио ĕçне йуратакансем хăйсем тĕллĕн радиоприйомниксем тунăшăн пĕрремĕш преми Шупашкар хулинчи Чермйанин йулташа 250 тенкĕ, иккĕмĕш преми пĕтĕм хумлă лайăх ĕçлекен „РФ-6" радиоприйомник тунăшăн Лебĕдĕв йулташа (Улатăр) 200 тенкĕ, виççĕмĕш преми Улатăр районĕнчи Çергейĕв йулташа „РФ-1" радиоприйомник тунăшăн 100 тенкĕ тата Лебĕдĕв (Куславкка), Андрейĕв (Шупашкар) 50-шар тенкĕ укçапа премилерĕ тата „Радио-фронт" журнал пĕр çуллăха çырăнса памала тунă. Кусемсĕр пуçне тата детектăрлă радиоприйомниксем тăвакансене пурĕ 8 çынна „Радио-фронт" журнал пĕр çуллăха çырăнса памала тунă.

Радио кружокĕсемпе радио ĕçне йуратакансене кулленех кăтартусем парса пулăшса пынăшăн Куславкка районĕнчи радио уполномоченнăйне Куприйанăв йулташа 200 тенкĕ, çав районтах „Йулашки хыпарсен" редакцийĕнчи массовик Анисимăв йулташа „Радио-фронт" журнал пĕр çуллăха çырăнса парса, Куславккари вăтам шкулпа Варасăрти туллимар вăтам шкулти радио кружок руководителĕсене Мељникăвпа Йегорăв йулташсене 50-шар тенкĕпе, Çĕрпӳ районĕнчи туллимар вăтам шкулти радио кружок руководителне Петров йулташа 100 тенкĕ укçапа премиленĕ.

Гер. Иванов.

Историн кăтартуллă урокĕ

1242 çулта Чудски кӳлĕ пăрĕ çинче аслă вырăс халăхĕ нимĕç рыцăрĕсене-йытăсене пуçĕпех çĕмĕрсе тăкнă.

1759 çулта вырăс çарĕсем Кунерсдорф патĕнче Пруççи королĕнe II Фридриха вăйлăн çĕмĕрсе тăкнă та 1760 çулта Берлина пырса кĕнĕ.

К. Теодорович ӳкерчĕкĕ („Пресс-клише").

Хăвăртлăхсем çителĕксĕр

ВĂРНАР. Район окт̆абĕрĕн 15-мĕшне çулйĕр планне 71 процент тултарнă. Уйрăм ĕçсене илсен: çĕр ĕçĕпе, кĕперсем тăвассипе тата иртнĕ çулта тунă çулсĕне йусассипе çулталăк планне ытлашшипех тултарнă. Çав вăхăтрах чул тата хăйăр турттарас ĕçсем çителĕксĕр пулса пыраççĕ.

Çулйĕр ĕçĕнче чылай йалсоветсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Акă, Мамалай йалсовечĕн план тăрăх 5 километр хушши çул йусамала. 200 метр тăршшĕ торцовкă сармала пулнă пулсан, кусене вăл пурнăçланă. Утарти „Трактăр" колхоз та хăйăр турттарас плана 110 процент тултарнă. Çулйĕр бригадирĕ Кљукăв йулташ кăçалхи çура çулйĕр планне вăхăтра тултарас тĕлĕшпе бригадă членĕсем хушшинче ăмăртупа стаханăвла йухăма анлăн сарса ĕçлерĕ.

Çавăн пекех çулйĕр ĕçĕнче Пăртас, Пĕнер колхозĕсем те тăрăшса ĕçлеççĕ. Ку колхозсем кăçал çулйĕр ĕçĕсен планне тултарнă.

Çав вăхăтрах çулйĕр ĕçĕпе начар ĕçлесе пыракан колхозсем те пур. Вăрман Шăхаљ колхозĕ хăйăр пĕртте турттарман. Пăвайалĕнчи „Бољшевик" колхозăн кăçал план тăрăх 1200 кубла метр хăйăр турттармала пулсан, вăл 10 кубла метр çеç турттарнă. Колхоз председателĕ Шемейĕв йулташ çулйĕр планне тултарас тĕлĕшпе вырăнтан та хускалмаст̆, йалсовечĕ те нимĕн те тумаст̆.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти çулйĕр строительстви планне тултарасси мĕнле пыни çинчен çент̆абĕрĕн 21-мĕшĕнче йышăннă постановленире: çулйĕр строительстви планне мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен йалсоветăн анлă пленумĕнче тата колхоз правлени ларăвĕнче сӳтсе-йавса çулйĕр строительстви планне кăçал окт̆абĕр уйăхĕнче тултармаллă конкретлă ĕçсем тума палăртма йалсовет председателĕсене хушнă, чылай йалсоветсем пайанхи кунччен те ку постановленине сӳтсе-йавман.

Халĕ Окт̆абĕр уйавĕ çывхарса килет. Колхозсен уйав умĕнхи ăмăртува хутшăнса çулйĕр планне тултармала.

Н. Козлов.

Хĕле хатĕрленмеççĕ

Куславкка комбиначĕн çуртйĕр пайĕнче ĕçлекенсем хĕллене хатĕрленес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлени курăнмаст̆. Чылай çуртсен алăкĕсем, чӳречисем çĕмрĕк, йусавлă мар кăмакасемпе плитасем те чылай. Акă, стаханăвĕцсен çуртĕнчи хăшпĕр пӳлĕмсенче чӳрече кантăкĕсем çук, тухса ӳкнĕ. Ăшă паракан труба йĕркелĕ ĕçлемест.

Хватерсене йусаттарас тесе комендант Мйаçников патне кайсан, вăл: „йурат̆" тесе çеç ответлет. Хапрăк-савăт комитечĕ хĕллене хатĕрленес тесе нимĕн те тумаст̆.

Г. Кузнецов.

Кĕскен

Оборонă значокĕсем илеççĕ. Канашри фељдшĕрсен шкулĕнче веренекенсем ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă тĕле оборонă значокĕсен нормисене параççĕ. 1-мĕш курсра вĕренекенсем 31 ача ПВХО значокĕн нормисене пачĕç. Халĕ ГСО тата БГТО значоксен нормисене параççĕ. **Степанăв.**

Аптекă магазинĕ. Шăхасанта Окт̆абĕр уйавĕ тĕлне аптекă магазинĕ тата райсойуз кантурĕн çуртне туса çитераççĕ.

Д. Иванов.

Йăла ыйтăвĕсем

„Хула совет йышăннипе хупнă"

Карл Маркс урамĕнче „Личный труд" ертелĕн парикмахĕрски пурччĕ. Халĕ ĕнтĕ çав парикмахĕрскин алăкĕ çине „Парикмахерская закрыта по постановлению Чебгорсовета, вопрос выясняется 25.X.38 г." тесе пĕлтерӳ çырса çапнă.

Мĕн пулнă? Хула совечĕ мĕншĕн-ха парикмахĕрскине хупма постановлени йышăннă? Ку ыйтăва хăçан татса параççĕ? Çак ыйтусем тăрăх промсойузра тата хула совеченче пулма тиврĕ. Хула советĕнче „Личный труд" ертелĕн парикмахĕрски çурчĕ начар, илемсĕр пирки хупма йышăнтăмăр, теççĕ.

Парикмахĕрскинче кашни сменăра 7—8 маçтăр ĕçленĕ, вĕсем патне кашни кун темиçе çын çӳренĕ, халĕ вĕсен ăçта каймала, тесе ыйтнине хирĕç:

— Ку пирĕн ĕç мар, епĕр Сойузнайа урамри парикмахĕрскине те хупма пултаратпăр, унăн та çурчĕ йурăхсăр,—теççĕ.

Промсойуз тата „Личный труд" ертелĕ 3 кун хушши „пирĕн çурт ĕçлеме йурăхлă, илемĕ çук пулсан та, ĕçлеме май пур", тесе хула совечĕпе тавлашаççĕ. Анчах ку тарана çитсе те парикмахĕрски çук-ха, унăн алăкĕ çинче пĕлтерӳ çакăнса тăрат̆. **Р. Ш.**

Анаткасри колхозра

Çĕнĕ клуб. Анаткасри „Париж Коммунĕ" колхоз (Шăхасан районĕ) Окт̆абĕр револљуци 21 çул тултарнă уйав йачĕпе 350 çын вырнаçмалăх çĕнĕ клуб туса лартрĕ. **Йегорăв.**

— О —

Смотр пулса иртрĕ

Комсомол 20 çул тултарнă йатпа окт̆абĕрĕн 21—23-мĕш кунĕсенче Ишлей районĕнче художествăллă пултарулăх кружокĕсен смотрĕ пулса иртрĕ. Смотра шкулсенчи тата колхозсенчи хор кружокĕсем, драмкружоксем тата уйрăм çамрăксем хутшăнчĕç.

Смотăрта пуринчен ытла Ишекри вăтам шкулăн хорĕ аван тĕслĕхсем кăтартрĕ. Ку хорта 130 çын. Хора Иљухин учитĕл йертсе пырат̆. Хор хаљхи çĕнĕ йурăсене пысăк пахалăхпа йурласа пачĕ. Комсомолĕц Никифăрăв йулташ та классиксен йуррисене лайăх йурларĕ. Ишлейри вăтам шкулти спорт кружокĕнче тăракан çамрăксем питĕ паха спорт номĕрĕсене кăтартса пачĕç. Вăл кружока 8-мĕш класра вĕренекен Добросмыслова йулташ йертсе пырат̆.

Анчах комиççи айăпĕпе, смотра чылай колхозсенчи тата шкулсенчи художествăллă кружоксем хутшăнмасăр йулчĕç.

Смотр комиççине çент̆абĕр уйăхĕнчех уйăрса хунă пулин те, вăл окт̆абĕрĕн 16-мĕшчен нимĕн те туман. Смотр пуласси çинчен вырăнсенчи кружоксене вăхăтра пĕлтермен. Питĕ кайа йулса пĕлтернипе, кружоксен пĕрик кун хушшинче хатĕрленсе çитсе смотра тухма май та пулман. Çавăнпа та районри смотра сахал кружоксем хутшăнчĕç.

Н. Амурцĕв.

Редакцине килнĕ çырусем

Камран пулăшу пулĕ-ши?

Епĕ мĕн çамрăкранпах пур обшчествăлла ĕçсене те активлăн хутшăнса ĕçлерĕм. Колхозсем организациленĕ вăхăтра кулаксемпе кĕрешме манăн нумай вăй хумала пулчĕ. Епĕ пур ĕçре те тӳррĕн те тĕрĕссĕн ĕçленине кура, 1934 çулта мана Орпаш йалсовет председателне (Тутаркас р.) суйларĕç. Пĕтĕм вăйа, пĕлĕве епĕ йалсоветне мала кăларас, колхозсене çирĕплетес ĕçе хутăм. Тăрăшса ĕçлени сайа каймарĕ, пирĕн йалсовет халиччен районра кайа йулса пынă пулсан, епĕ ĕçленĕ вăхăтра пур йенĕпе те мала тухрĕ.

Анчах ĕçре сахал мар йăварлăхсем пулнипе, пĕчĕкрен хĕн-хур, асап курса ӳснипе мана ĕçленĕ хушăра ӳпке туперкуљозĕ пусса илчĕ. Туперкуљоз мана ĕçе йурăхсăр туса инвалида хăварчĕ, 1936 çулти декабĕр уйăхĕнче епĕ йалсовет председателĕнчен тухрăм.

Усал чиртен хăтăлас тесе сахал мар тăрăшрăм, анчах манăн сывлăх çаплах начарлансах пычĕ. Вара епĕ санаторине кайса сывалма шутларăм. Кăçалхи апрел уйăхĕнче санаторине йама ыйтса ПСК(б)П Тутаркас райкомне çырса пĕлтертĕм. Райкомра ман çинчен сӳтсе-йавсан: „пулăшу кирлĕ, Чуварлейри санаторине сыватма йарас", терĕç. Райĕçтавком председателĕн заместителĕ Овчинникăв йулташа мана санаторине йама пут̆овкă тупма хушрĕç.

Çакăн хыççăн епĕ хĕпĕртерĕм. Чуварлейри санаторине кайма пут̆овкă парассине кашни кунах кĕтрĕм. Райĕçтавкома кайса пут̆овкă хăçан килмелине пыра-пыра ыйтрăм. Райĕçтавкомран мана:

— Пут̆овкă ийуњ уйăхĕнче пулат̆,—терĕç. Ийуњ уйăхĕнче пут̆овкă пулмарĕ, унтан вĕсем каллех:

— Ийуљ уйăхĕнче... августра... çент̆абĕрте,—тесе тăсса пычĕç. Мана çак тарана çитсе те пут̆овкă памарĕç. Манăн санаторине кайса сываласси пулмарĕ. Райĕçтавкомри мĕн кăмăллă çынсем мана сывалма йама пайанхи куна çитсе те Чуварлейри санатори счочĕ çине укçа куçармарĕç, мана суйса çеç пурăнчĕç.

Халĕ Чуварлей санаторине ремонт тума икĕ уйăхлăх (окт̆абĕр—нойабĕр) хупрĕç. Манăн каллех сываласси пулмарĕ.

Манăн малашне камран пулăшу илмеле-ши? **И. Соколов.**

Столовăйра сивĕ

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçулăн Шупашкар станцинчи столовăй йулашки вăхăтра йапăх ĕçлеме пуçларĕ. Хăшпĕр кун столовăй пачах ĕçлемест.

Хĕллене хатĕрленес ĕçсем те çав тери начар. Столовăйне чуссемпе кăна тунă, алăксем, чӳречисем çук. **П. Ромин.**

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

Тăваттăмĕш квартăлти строительствă ĕçĕсем

Совет Сойузĕ çултан çулах пысăк строительствă планне пурнăçа кĕртсе пырат̆. Строительствă ĕçĕ Чăваш республикĕнче те вăйлансах пырат̆. Йулашки çулсенче коммуналлă, пурăнмали çуртйĕр тата культурăпа йăла строительствине вуншар, çĕршер мĕлйун тенкĕ хывнă. 1938 çулта туса çитермен строительствăсене (советсен çурчĕпе пединститутăн 2-мĕш черетлĕ çурчĕсĕр пуçне) лурне те тата çĕнĕрен икĕ пысăк шкул, икĕ çĕрте ача йаçлисем (Улатăрпа Шупашкарта), ача çуратмали çурт, Улатăрпа Канашра — мунчасем, Шупашкарта 24 хватерлĕ çурт, маљари станци çуртне т. ыт. стройкăсене туса пĕтермеле.

Халĕ строительствă çезонĕн йулашки кунĕсем иртсе пыраççĕ. Анчах чылай стройкăсем тăрăх плана тултарасси начар пырат̆-ха. Окт̆абĕрĕн 1-мĕшĕ тĕлне капитаљнăй строительствăн çулталăкри финанс планне 42,7 процент, стройкăсене туса пĕтерес плана сметă хакĕпе шутласан 31 процент çеç тултарнă. Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссариачĕн руководителĕ пулнă Каплин капитаљнăй строительствă ĕçĕ çине ответсăр пăхнипе, коммуналлă хуçалăха хывнă укçа-тенкĕпе усă курассине вăрăма хăварса пынă. Çавна пула уйăрса панă укçа-тенкĕрен 50,9 процентĕпе çеç усă курнă. Уйрăмăн илсен пурăнмали çуртсем тăвассипе 57,5 процент, советсен çуртне тăвассипе 36,7 процент çеç усă курнă.

Шупашкарти „Водосвет" директăрĕ Николайĕв йулташ тата хула совечĕн коммуналлă пай пуçлăхĕ Инайĕв йулташ иртнĕ çулхи ĕçсенчен нимĕнле урок та туман-ха. Иртнĕ çулта водопровод тума панă укçаран 123,1 пин тенкĕ, електростанци тума панă укçаран 155,6 пин тенкĕ, пĕтĕмпе 278,8 пин тенкĕ усă курмасăр йулнă. Николайĕвпа Инайĕв йулташсем строительствă ĕçĕ пурнăçа кĕмесĕр йулнишĕн хăйсене ответлă тесе шутламаççĕ. Çавăнпа електростанци тăвас плана окт̆абĕрĕн 1-мĕшне 37,2 процент, водопровод тăвас плана 54,7 процент çеç тултарнă. Строительствă ĕçне тума панă укçапа усă курман пирки окт̆абĕрĕн 5-мĕшĕнче РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 270 пин тенкĕ кайала илчĕ. Çапла вара, малашнехи ĕç ваљљи халĕ укçа-тенкĕ çителĕксĕр. Акă мĕн патне илсе пычĕ строительствă руководителĕсем ответлăха туйманни.

Çавăн пекех, советсен çуртне тăвасси йапăх пынине шута илсе, РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ III-мĕш квартăлти строительствă ĕçĕсен виçине 500 пин тенкĕлĕх чакарнă. Анчах строительствă ĕçĕсен виçи чылай чакнă пулин те плана тултарасси ăнăçлăн пурнăçланса пымаст̆. 1329 пин тенкĕ укçаран 487 тенкипе çеç усă курнă.

Шупашкар хула урамĕсене асфаљт сарасси тата тротуарсем тăвасси те чăтма çук йапăх пырат̆. Ку ĕçсене тума панă укçа-тенкĕпе 58,6 процентĕпе кăна усă курнă. Хула совечĕн урамсене асфаљт сарас плана пĕтĕмпех тултарассишĕн халех татăклă ĕçсем тумала.

1937 çултан куçнă стройкăсене: ачасен йаçлисене, сĕт кухњисене т. ыт. те туса пĕтерме материалсем, укçа-тенкĕ çителĕклĕ пулнă, халĕ те пур. Апла пулин те строительствă планне çурри ытларах кăна пурнăçа кĕртнĕ.

Педагогикă институчĕн иккĕмĕш черетри çуртне кăçал туса пĕтермеле пулнă. Строительствă ваљљи пур кирлĕ материалсене те хатĕрленĕ. Анчах Чăвашстройтрест руководителĕсем тата пединститут дирекцийĕ ĕç хăй тĕллĕн пуласси çине шанса лараççĕ пулас. Строительствă ĕçне халĕ те пуçăнман.

Улатăрпа Шупашкар хула совечĕсем çĕнĕрен ача сачĕсен çурчĕсене тăвассине йапăх йертсе пыраççĕ. Шупашкарта ача сачĕн çуртне тăвас вырăнта çĕр чавас ĕçсене кăна тума тытăннă, урăхла каласан 172 пин тенкĕрен 31,1 пин тенкĕпе кăна усă курнă. Канашпа Улатăр хулисенче мунчасем тăвасси вăрăма кайнă.

Чăвашкинотрест (Андрейĕв) районсене кинофикацилеме панă укçана 36,3 процентне кăна ĕçе кĕртнĕ. Иртнĕ çулта та кинотрест 98,5 пин тенкĕ укçана усă курмасăр хăварнă.

Государствă кăçал Академи театрĕн çуртне йусама 100 пин тенкĕ, саслă киноатеатр çуртне йусама—198 пин тенкĕ панă. Кинотеатра йусама тытăнман-ха, Академи театрне те шал йенчен кăна шуратса лартнă.

Строительствă çезонĕ хĕрсе пынă вăхăтра чылай çĕрте ĕç вăйĕ (каменшчиксем, платниксем т. ыт. те) çителĕксĕр пулнă. Кунашкал пулни чи малтанах хуçалăх тата строительствă организацисем çезона хатĕрленнĕ вăхăтра ĕç вăйĕ хăй тĕллĕн пухăнасси çине шанса тăнинчен килсе тухнă. Чăвашстройтрест кадрсем хатĕрлеме панă 93 пин тенкĕ укçаран 10 пин тенкипе çеç усă курнă. Вăл рабочисем ваљљи çуртйĕрсем тума тата ĕçе механизацилеме панă укçа-тенкĕпе çуррипе те усă курман.

Строительствăсенче тăшмансем туса хăварнă сăтăрлăха пĕтерессе вăрах пырат̆. Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссариачĕн, стройтрестăн çĕнĕ руководителĕсем сăтăрлă ĕçсене пĕтерес тĕлĕшпе татăклă ĕçсем туни курăнмаст̆-ха.

Стаханăвла йухăм çине хаклаласăр пăхнине те пĕтермен. График тăрăх ĕçлессине организацилемен пирки механизмсемпе, пур пек ĕç вăйĕпе усă курасси йапăх тăрат̆.

Строительсем хушшинче политикăлла-массăллă ĕçе вăйлатас пирки решенисем сахал мар çырнă. Анчах вĕсем пурнăçа кĕмесĕр йулнă. Партипе профсойуз организацисен ПСК(б)П Чăваш организацин облăçри XIX-мĕш конференци кăтартса хăварнисене вăраха йамасăр пурнăçа кĕртме тытăнмала.

Иртнĕ виçĕ квартăл хушшинче строительствă планне тултарасси йулса пынине 4-мĕш квартăлта пĕтĕмпех пĕтермеле. Апла пулсан строительсем умĕнче 4-мĕш квартăлта нихăçанхинчен пысăк, ответлă задачăсем тăраççĕ.

Строительствă ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлесе çитерме чи малтанах халăх тăшманĕсем туса хăварнă сăтăрлăха кĕске вăхăтрах пĕтермеле. Кашни строительствăна çирĕп график тăрăх туса пымала тăвас пулат̆.

Ĕç тухăçлăхне хăвăрттăн ӳстерсе пымали пысăк май вăл стаханăвла йухăма вăйлатсах пырса, ăна массăлă йухăм туса хунинче. Стаханăвла йухăма вăйлатнă çĕрте комплекслă бригадăсем йышлăн организацилени, лайăх опытсене сарни тĕп вырăнта тăрат̆. Руководителсен, партипе профсойуз организацисен пĕтĕм тимлĕхпе ĕçлесе пур строительсене те Окт̆абĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнтарса, ăмăртса ĕçлекенсене ударник, стаханăвĕц пулма пулăшмала.

Строительствăсенче пурлăха салатнине, финанс йĕркине пăснине хирĕç хăйар кĕрешӳ пуçармала. Çавна тума отчотпа учот ĕçне тĕрĕс йĕркелени кирлĕ. Çак кунсенчех инвентаризаци туса пĕтермеле. Контроль ĕçне çӳлĕ вырăна çĕклемеле.

ПСК(б)П Чăваш организацин облăçри XIX-мĕш конференцийĕ Чăваш республикĕнче капитаљнăй строительствă ĕçĕнчи çитменлĕхсене бољшевикла критиклерĕ. Конференци йышăннă решени кашни руководителĕн, инженерăн, техникăн, строительĕн ĕç программи пулса тăрат̆. Вăл программăна пурнăçа кĕртме халăх комиссариачĕсен, стройтрест руководителĕсен, хула совечĕсен коммуналлă строительствă ĕçне хăйсен куллен оперативлă йертсе пымала.

В. Таврин.

27 ОКТ̆АБĔРĔН 27

Чăвашсен Государствă филармонийĕ ШУПАШКАРТИ

Пионерсен çуртĕнче

1938 — çулхи — 1939

КОНЦЕРТ ÇЕЗОННЕ УÇĂТ̆.

Концерт çезонне уçнă çĕрте: Чăвашсен Государствă хорĕ, духовой еркестр, вокаљнăй квартет тата трио пулат̆.

Дирижорсем: Ростиславин А. М., Шах-Назарăв М. А.

Солистсем: Андрейĕв (баритон), Кљушникова (сопрано), Орлова (сопрано), Çеменăва (меццо-сопрано).

Концерт Шупашкарти Пионерсен çуртĕнче каçхине 8 сехетре уçăлат̆, билетсене кăнтăрла 2 сехетрен пуçласа 9 сехетчен сутаççĕ.

ДИРЕКЦИ.

ПУРНЕ ТЕ

Шупашкарти çĕнĕ савăт тунă çĕрте çакăн пек квалификациллĕ работниксем кирлĕ:

Строительствă участкисен начаљникĕсем, прорабсем, нормировшчиксем, камĕншчиксем тата строительствă деçатникĕсем.

Ĕçе кĕрес текенсен çак адрĕспе, хăйсен кĕске автобиографине ирсе, кадрсен пайне пымала: Шупашкар хули, Чернышевски урамĕ, 5-мĕш номĕрлĕ çурт, почтă йешчĕкĕ 12.

Кадрсен пайĕ.

„ЧĂВАШ КОММУНИ" СЫРĂНСА ИЛМЕЛИ ХАКСЕМ: ПĔР УЙĂХА 2 т. 50 пус 3 УЙĂХА 7 т. 50 п., 6 УЙĂХА 15 т., СУЛТАЛĂКА 30 тенкĕ. ПОДПИСКĂНА СЫХАНУ УЙРĂМĔСЕМ, ПИСМОНОСЕЦСЕМ ЙЫШĂНАÇÇĔ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 553. Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 7926. 6. 5000 24 к. л.